Михаил Сунтал

# ÇУЛ ÇИНЧЕ
# ÇЫРНĂ САВĂСЕМ

Шупашкар 2009

ББК 84 (2РОС) =Чув) 6-52Я93
С 93

Михаил Сунтал. Çул çинче çырнă сăвăсем. – Шупашкар, 2009. – 85 с.

Ку кĕнекери сăвăсене, пĕр пĕтĕмĕшле илсен, 20-мĕш ĕмĕр вĕçнелле 90-мĕш çулсенче çырнă. Çавăнпа та унта тĕнче ваннă вăхăт пулăмĕсем сăрхăнса кĕнĕ, чĕрене ыраттарнă, сăмаха çивĕчлетнĕ. Тĕрĕссипе, çул çинче мĕн курнă, çавна çырнă.

М. Сунтал, 2009

* * *

Аллуна хытарса чăмăркка ăш юра
Ирĕлсе пĕтиччен тытса пыр.
Савни кайрĕ пулсан уйрăлса та санран
Кайнине те пулин пăхса юл.
Ăшă юр, ăшă юр, ăшă юр,
Куççуль евĕр çĕре ан ӳксем.
Ăшă юр, ăшă юр, ăшă юр,
Ахалех ирĕлсе ан пĕтсем.
Савни кайнă чухне тӳпере,
Тен, такам хурланать пулинех.
Юр пĕрчи тăкăнать çутă пек,
Тĕнче тулчĕ пуль юр çунипех.
Йĕр çинче, курăнать, пухăнать сивĕ юр,
Аллăмра чĕре евĕр туни те ман пур.
Юр хӳсе кайиччен... тепĕр хут
Çав йĕр хыççăн тепре утса тух.

* * *

Ах, сăнĕ ун куç умĕнчех-ха,
Куççулĕ те пичĕ çинчех.
Кушак пек кусса çӳрет-ха,
Ман чун та ун çумĕнчех...
Пырса ыталас пек пăхать те
Каллех йăл-йăл-йăл! кулать.
Ах, чунăмçăм, кулă каять те
Куççулĕ питре – юлать.
Санпа çеç выляс тенĕн
Çӳреттĕм-ха эп ир те каç.
Çынра темăскер тупаслăн
Хама та мансах пырап.
Ак ĕнтĕ, чăнах та тупрăм:
Курнатăн шап-шур панулмин.
Таса урай тăрăх кăлтрин!

Кулса кусса кайрăн хуллен...
Улма, тет, тухатнăн пулать,
Çапла, тет, этем çуралать.
Тăмран тунă çыннăн ӳчĕ
Асаплăн халь тин ыратать.
Çавра хĕвел евĕр хĕр чунĕ
Каллех улмалла çаврăнать...
Тахçан тухнă çутă куççулĕ
Шăрçан çĕре йăлт тăкăнать.

* * *

Юлса çур сехет... Килинччĕ
Часрах эпĕ кĕтнĕ вăхăт.
Çара алăпах илинччĕ
Ман чĕрене... Чĕрĕпĕн
Вăл хутланса выртсан та,
Аллу юнланса ыратсан та
Илсем эс ăна ална...
Чĕре таппине тăнла...
Епле вăл хăравăçлăн та татăклăн
Тăк-так! пек тăвать сан умра.
Хăйне вăл темле пытарсан та
Илтетĕн пулех çавна.
Е, акă, ытла йĕплесен те
Ай-уй! тесе калăн пăртак.
Унтан тăхтаса тăмасăр
Пăрахăн ăна лăпах...
Анчах ан хăра... Вăл пĕтмĕ,
Вăл ĕнтĕ йăлтах халь йĕплĕ,
Ăна, тем, тытма та тертлĕ.
Тен, урăх тытаймăн... Мĕн-ма
Кирлех, тет, сана макăрма.
Юлса çур сехет... Килинччĕ,
Килсен те çав вăхăт иртинччĕ,
Ман чĕрене те илминччĕ...

Вăл юлтăр çав чĕрĕп пек –
Чĕрĕп вĕт чĕрĕ пекех!

* * *

Ах, Зоя, Зоя, чун çунтармăш,
Миçе минут пуль кун кустарчĕ
Эс килнĕ хыççăн тĕнчене?
Анчах пĕри те хăвармарĕ
Сан пит çине хăйĕн йĕрне.
Сана сăнарăм ир те каçăн,
Сехет çине те пăхрăм тек.
Мана эс уншăн, тен, каçарăн,
Ху арçынна каçарнă пек.
Вĕт пурнăçра, хăвах пĕлетĕн,
Тем те пулать... Вара тĕлнетĕн,
Манпа мĕн пулчĕ-ха тесе.
Татах та килессе кĕтетĕн
Чĕре пĕлмен чăн пурнăçа...
Ах, Зоя, Зоя, чун çунтармăш,
Хама туятăп сехет пек.
Ху аллупа ăна хускатрăн,
Йĕппи çине те лартăн пек...

* * *

Чăмăркка чечек эс татса килтĕн –
Тем чухлех иккен вĕсем сан аллунта!
Чечеке те, панăçем, эс илтĕн
Манăн канлĕхе яланлăха...
Аса илтĕм эп те... Ача чух вĕт
Пит нумай татса кун пек чечек.
Вăрман тăрăх ун чухне эп чупнă,
Чечек курнă та... Чуна çапса пичет.
Ун чухне чечек чылай курнатчĕ,
Ывçăн-ывçăн татнăçем вара,
Вăрмантан таçта кайса çухалчĕç...

Халĕ çуккă вăрманта чечек,
Çуккă чĕрере те çав пичет.
Çавăнпа пуль чунăмпа хурлантăм,
Куртăм та алра... Чĕре темле
Талса ӳкнĕн туйăнчĕ тӳрех.
Тепĕр хут çав вăрмантах çӳренĕн
Чупса кайрăм пулĕ çав тĕлех.
Çавăнтах иккен ман чун çӳрет,
Çавăнтах, çав вăрманах чĕнет.
Эс кăтартнă ĕлĕкхи кĕтретлĕх
Пурăнать манра-мĕн чиперех!
Эх-эх-эх! тесе калас килет те
Юрĕ-çке, каламăп... Сан аллу,
Сан аллу вĕт пулчĕ юратулăх,
Çавăнпа туятăп уйрăлу.
Ĕнтĕ çитрĕ пулĕ кĕтнĕ кунăм,
Пичет çапнă чĕрене тин тупрăм.

* * *

Пĕрремĕш юрпа темĕнле савăнса
Сикетĕп ача пек, вĕçетĕп юр пек.
Анчах хальлĕхе чĕрере хура кĕр.
Кĕр пек вăрмана уçăлма пырса кĕр!
Унта çулçăсем, йĕпенсе пĕтнисем...
Тахçан пит аванччĕ-çке вĕсем!..
Сап-сар тĕсĕпе мухтанатчĕç,
Хĕвел пек пăхса выртатчĕç...
Çил майăн вĕçетчĕç...
Ман чун та пĕрле
Çав çулçă пек пĕтрĕ сĕм-çĕрле...
Халь тин мĕн куратăп?.. Шур юр.
Апла, манăн чун та пур!

* * *

Çĕнĕ уçлăх уçăласса кĕтрĕм...

Кĕтнĕ кун нумай пĕтрĕм.
Ку тĕнчере пурăнас килместчĕ,
Кунта пĕр çын та тăван теместчĕ...
Çав уçлăха çул шырарăм,
Çула тухма питĕ хăрарăм.
Унта илемлĕ пулĕ те – пурнăç çук.
Анчах кунта та эсĕ – ăçтиçук!
Тен, çавăнпа кунта та пит аван?
Утса пыратăп урампа аран-аран...
Питрен ирхи çил çупăрлать,..
Илемлĕх-мĕн ирпе çеç çуралать...
Хĕвел те ман пекех тапаçланать!
Эп çĕнĕ уçлăхра çӳретĕп вĕт, атьсем!
Таçта çухалчĕç тĕксĕм пĕлĕтсем...
Эс, ăçтиçук, пĕрех çак уçлăхрах
Çĕнелтĕн вĕт ирхи çак самантрах!

* * *
Ăшшăн-ăшшăн пăхса ларчĕ
Пĕчĕк хĕрупраç.
Темĕн каласа хăварчĕ –
Халĕ ас тумас!

Чунра халĕ питĕ канлĕ,
Тем те тĕлленеп.
Тарăху та иртсе кайрĕ –
Халĕ чĕрĕлеп!

Халь каллех тытса пăхатăп
Хурăн хуппине.
Тутапа туса кăларăп
Чĕре юррине...

Çакăн пек вĕт чĕлхеленчĕ
Маншăн çут тĕнче.

Хурăн пек эп вĕçкĕнлентĕм
Ăшă çил çинче.

* * *

Кăвак çутă килсен,
Хĕвелпе чăн малтан
Çӳле кайнă тăри тĕл пулать.
Аялта, çĕр çинче, тĕттĕмрех те кăштах –
Çырмара шур тĕтре явăнать.
Кăн-кăвак çĕршывра
Кăмăлсем урăхла.
Кăвак кун чи çӳлте çуралать,
Ун çинчен, чăн малтан, тăри хыпарлать.

* * *

Мĕнле çул ку, чăлханнă çип пек.
Мĕн вара ку, чупать çын пекех?
Çулне çыхса тухнă хула тăршшипе.
Такам, тен, çĕлесшĕн темле пĕр кĕпе?
Пăхса çеç пыратăп тĕлĕннипе.
Шутлатăп, тен, эпĕ те çул йĕппи?
Çын хывнă çул пулĕ хула кĕпи?

* * *

Халĕ нимĕн те пĕлместĕп.
Пĕлме кирлĕ мар...
Пурнăçран ним те кĕтместĕп –
Кĕтме çуралман.
Пултăр пурнăç питĕ йывăр,
Ыйттăрах куççуль.
Луччĕ эсĕ вырт та çывăр,
Тĕлĕк кур тем чуль.
Тепĕр чух вара шутлатăп:
Кун пек аван мар!
Йывăррăн кăна сывлатăп –

Чăн та сывă мар!
Мĕн-ши ĕнтĕ сана кирлĕ,
Мĕн-ха кансĕрлет?
Юратасчĕ питĕ вирлĕ –
Вара, тен, çитет?..

* * *

Таçта вăрманта шалта шурă-шурă...
Таçта чăтлăхра шур вĕçсĕрлĕх пур.
Таçта çавăнта çӳрет манăн чунăм,
Таçта çавăнтах вĕçет шурă юр.
Унта эс турат пек, унта эсĕ Турă.
Унта уйăп евĕр ман кайăкăм пур.
Унта упранать шур хĕлĕн чăн мулĕ,
Унта юрламалăх ман юрă та пур!
Таçта вăрманта шалта шурă-шурă...
Таçта чăтлăхра шур вĕçсĕрлĕх пур.
Таçта çавăнта пурăнать манăн туррăм,
Таçта çавăнта вĕçет шурă юр...

* * *

Хĕллехи çӳлтех мар çут хĕвел
Кам çӳлте, çавна çеç ачашлать.
Сиксе тухрĕ хĕвел ирпеле пĕр çĕклем,
Çĕр çинче те, халь тин, йăлл! кулать.
Çырмари, аялти, вăрманти вырăнсем
Хуп-хурах выртса юлчĕç пулас.
Шурă юр çине ӳкнĕ хура мĕлкесем
Упа пек упаленчĕç пĕр кас.
Унтан ӳкрĕç лăпах та – çухалчĕç,
Хура каç шуса килчĕ каллех.
Çӳлте çеç тепĕртак хуçаланчĕ
Çут хĕвел пайăрки пĕр кас.
Ак, çухалчĕ пулас, вăл та час
Тухас çук тӳпене çак каç...

Чун кăна çӳлте пек вутланать,
Ирчченех хĕвелпе пурăнать.

* * *

«Çын çиен», тенисем ахаль мар:
Аттепе аннене, тăван çĕршыва,
Анне панă тăван чĕлхене
Çисе ятăмăр эпĕр йăлтах.
Тăрса юлчĕ вара тĕнчен шăмшакки,
Ун чунне çисе янă пулать.
Вăл усал, вăл шуйттан хăраххи,
Унпа çеç эпĕ туслă пурнап.
Чун тени урăхла саккунпа
Пурăнать пулмалла, ху шутла!
Çынна «çирĕн» пулсан, эс пĕтен.
Чун хушсан вара, тен, пурăнан?

* * *

Канăçлă мăнă хула
Юр çутипе тулса.
Халĕ те çил улать –
Чун çавăнпа кулать?

Ура çĕн çула тĕрĕслет.
Çĕн юр айĕнче пăр!
Часах çуркунне килет –
Ача пек кĕтсех тăр!

Ура, пуснăçем, шăвать.
Тен, ӳкесрен хăрать?
Ӳкме кирлĕ мар, паллах,
Ку çул вĕт сана ас тăвать!

* * *

Каçпа пырса çапăннă кайăк

Килет, тет, чуна илме.
Ирпе вĕçсе килнĕ чухне
Хушать пуль ман чуна?
Шутлатăп вара, чăн та,
Телейĕм ку ман, тесе.
Йăлтăр кăна шăрçа куçлă
Ташлать ик çунат çапса...

* * *

Юр çыранлă çап-çут кӳлленчĕк
Ас илтерчĕ кăвак пĕлĕте.
Тахçанах вĕт çапла пĕркенчĕк
Эпĕ курнăччĕ çак тĕкĕрте...
Сар хĕвел те кунтах пул тытаслăн
Çилпеле сĕркелет хумсене.
Тытнă пĕр шур пулли çут çунатлăн
Выртса тухрĕ юр кĕрчĕ çине.

* * *

Урамра хальлĕхе тĕттĕм...
Утнăçем, темĕскер кĕтрĕм...
Утас çул курăнать тĕтреллĕ –
Пурпĕрех темĕнле чĕреллĕ!..
Пĕр тĕлте тĕттĕмре те куртăм:
Пур пек темĕнле çулăм...
Ӳсет-мĕн унта ешĕл курăк –
Пачĕ мана çавă пурнăç!
Темле вăл ытла асамлăн
Ман чĕрене чăмăртарĕ.
Çакă тĕнче питĕ анлă –
Çапах кун пекки курманччĕ.
Тĕтреллĕ ку çул та кĕтретлĕ,
Ку çулăм та пĕтерет-тĕр!
Выртать-ха шур юрĕ хулăн –
Ун хĕррипе симĕс çулăм...

* * *

Урамра темĕнле йывăçсем...
Çул çинче пур усал йĕррисем.
Усал йĕрĕ çине пусрăм эпĕ –
Пулса тăтăм эпĕ те упăте!
Усал йĕрĕпе каяс марччĕ,..
Малтан эп вĕçсе çӳресеччĕ...
Такам тăм пăшалĕ печĕ,
Ку та пĕттĕр, терĕ...
Çунатăм ĕнтĕ усăнчĕ,
Усал тени мана тытрĕ.
Пĕрех урăх çул тупатăп,
Ыр çын йĕрĕпе каятăп.

* * *

Пиншер çулсем иртрĕç унтанпа...
Пĕрех Нефертитти халь те манпа.
«Ку, Нефертитти, чи хитре хĕрарăм!», –
Ун пек калама сире хăрамарăм.
Тен, хам та эп халь фараон?
Пиншер çулсем иртнĕ – пĕрех ватăлман,
Хăй илемне те вăл çухатман.
Эп куртăм ăна тăван çĕршыв майлă,
Уй куçлă, вăрман пек хăлхаллă.
Чĕлхи шыв юххи пек тасалнă...
Çапла чăваш хĕрĕ тăрать ман умра.
Халь тин пуль пăрахрăм унран хăрама.

* * *

Çуркунне çĕр çинче
Пуçланать чăн пурнăç.
Тӳпере пуç çинче
Юр юрлать пĕр юрăç.

Темĕнле урăх пурнăç,
Ырлăхран ырă пурнăç.
Çуккă пуль унта хурлăх,
Çуккă пуль нимле шырлăх...

Мĕн пурри çĕр çинчен
Çӳлелле ăнтăлать.
Тӳпери çуркунне
Çĕр çинче пуçланать.

* * *

Ăшăтать пуль теттĕм,
Юрату кĕтеттĕм...
Килсе çитрĕ сивĕ, –
Туйăмсем ман кивĕ...

Юр пĕрчи пек сикрĕм,
Çулпа вĕçсе кайрăм.
Пĕртте хăрамарăм, –
Çутă ман сукмакăм.

Çакă ман телейĕм.
Эп вĕçме пĕлетĕп...
Юр пек эпĕ халĕ –
Юр ман чун хавалĕ.

* * *

Çанталăк улшăнчĕ.
Çупкам юр ывăтрĕ.
Чĕреçĕм савăнчĕ,
Вăл та тăвăлнă пулнă.
Ир енче тăвăллă
Çил лăпланчĕ.
Кĕрт çӳхе туталлă,
Тил хӳрин ятуллă.

Тăвăлăн тымарĕ талчĕ,
Чĕре çутăпа тулчĕ.

* * *

Ак, пуçланать те пăтăрмах,
Вара ванать тĕнче татах.
Пĕтсе каять чăваш йăлтах,
Тĕпре, апла, пĕр йăнăш пур, чăнах!
Тахçан такам хăй тăванне, тен, сутнă,
Е хăй суялăх шурлăхне те путнă?
Пăрахнă хăйĕн тур пек ачине,
Çапса салатнă пĕчĕк сăпкине...
Тен, çавăнпа инкек тӳсетпĕр,
Çапкаланса çак тĕнчере çӳретпĕр?
Кам айăплă тесе, мĕн-ма ыйтатпăр?
Вăл хамăрта, çавна курмастпăр...

* * *

Шăнкăртатса юхать çут шыв.
Шыв айĕнче тем чухлĕ чул.
Эпир шыратпăр пĕр вутчуль.
Кăвайт чĕртмешкĕн шăрпăк çук.
Пулли те пур, кăварĕ çук.
Эпир шыратпăр кăвара
Шăнкăртатса выртан шывра.
Выртать вăл ĕмĕртен кунта,
Тен, çавăнпа та яп-яка...
Кăшт найлака та йĕперех...
Çапса пăхатăн та ăна,
Шалта вутран та типĕрех.
Шалта ун çиçĕм йĕррисем,
Тахçан кунта вут чĕртнисем...

* * *

Мĕн-ма куçа эс курăнмастăн?..

Таçта çӳретĕн юрласа.
Юрру сан хăлхаран каймарĕ,
Тĕнче итлерĕ тайăлса.
Таçта эс аякра юрлатăн
Ытла та хурлăхлăн кулса.
Эп сан пата утса пăхатăп,
Юрри вара манран тарать.
Пур пек таçта темле çанталăк,
Унта пуль уçăлать пĕр алăк.
Пĕр çавăнта хĕвел пăхать.
Тен, çавăнта пĕр хĕр юрлать?
Мана валли унта çул çук,
Тĕнче çеç çав çула пĕлет.
Утать унта пĕр ăçтиçук,
Пĕр çав юрра кăна илтет.

* * *

Çапла кăçал шыв-шур пуçланчĕ,
Йĕри-тавра çил хуçаланчĕ.
Ӳкет, ак, çумăр шăпăр-шăпăр,
Эпир пăхса тăратпăр шăпăрт!
Пĕр савăнса пăшăрханатпăр.
Ку çуркунне аван та хăвăрт
Иртсе каять пуль сивĕ нарăс.
Вара мĕнпе юлатăр хăвăр?

* * *

Пăхса тăратăп эп салху.
Чунра пĕр юрату та çук –
Çак çуркунне çеç пур!

* * *

Çара ӳтлĕ хĕр пек çĕр
Кĕпе тăхăнасшăн-тĕр?
Выртать пăрлă тум-асфальт –

Тумне халĕ кам хывать?

* * *

Тин çеç-ха шур юр выртатчĕ...
Çĕркаç çумăр çунă пулас та
Хуралнă газон та çуталчĕ.
Ытти пит нимех те курмарăм,
Пĕр майлă кăна шутларăм:
Юрать çак çумăр пур,
Юхать-ха кăштах шыв-шур.
Тӳпе те газон пек шăтрĕ,
Мана та çак курăк йăтрĕ...

* * *

Çумăр çăвать тĕнче тăршшипех...
Ырра мар пуль ку, кирлĕ марччĕ!..
Кун пеккине эп курманччĕ.
Çумăр вĕттĕн тухать чĕре витĕр.
Вăл тухса, чăн малтан, пĕлĕт витĕр...
Халь вара çĕре витерет.
Витерчĕ ĕнтĕ, витерчĕ,
Те пĕтерчĕ, те çитерчĕ...
Чĕре кишĕр пек илемленчĕ,
Çумăр чĕрене витерчĕ.
Çĕрпе пĕлĕт çăвăнчĕçĕ,
Çумăрчăкла вылярĕçĕ...

* * *

Инçет вăрмана çитесчĕ,
Юр чечекне татасчĕ.
Çулсем хытса çитрĕç тинех.
Пулат-и-ха мăйăр тесе,
Шыратăп кĕрен çеçкине...
Çак çул çинче пур вĕт тем те,
Кĕтет пуль пĕр пĕчĕк телей те!

Çил варкăшăн, шăппăн çӳрет,
Е çавăрса ӳкерет...

* * *

Эп кĕтнĕччĕ – сивĕ пулать.
Куратăп та – ăшă тăрать!
Утатăп пĕччен, майĕпен,
Туятăп хама ĕлккен...
Тĕтреллĕ инçет хуралать,
Çурхи кун паян васкамасть.
Тумламлă турат авăнать,
Шăпăр кăна тăкăнать.
Кӳлленчĕк тӳпе пек аван,
Мĕн пуррине кăтартать...

* * *

Тĕтре ăшĕнче çур тĕнче пуль?
Тĕтре ăшĕнче тем те пур.
Çавна курнăçем эп тĕллентĕм...
Эс çу, тĕтре, çу та çĕклен,
Çӳле кайнăçем, пул çăмăл!
Çак çĕр çине килнĕ çĕклем
Çунат хушса вĕçтĕр, терĕм.
Турат çакса хунă тĕлте
Çӳлтен çакланса тăкăн шăпăрр!
Вара шур турат та çăмăллăн
Вăшт! çеç çĕкленсе каять...

* * *

Хĕвел патне çул кукăр-макăр,
Армак-чармак пек ку çăка, –
Пуçа кĕрет ку тем тума –
Çулçи ун çавракa, çыруллӑ,
Туни вара тӳсет асап...
Асат, тен, хуçнă пуль ăна?

Сăлтавĕ, куç кĕрет, ансат:
Çак çăкана пĕр çын касать.
Тен, çавăнпа ытла хăрушă
Пулса каять мана пĕр хушă?
Хĕвел патне ман çул халь кукăр,
Çăка пек эп армак-чармак...

* * *

Тĕксĕм те çумăрлă кун ăшĕнче
Йывăç чечек пек çурнă
Çак кĕçнерникун.
Чăваш пек таса куçлăн
Çулçă йăлтăртатать...

* * *

Кунта пĕтĕмпех урăх хутлăх,
Вăрман тăршшипех темле çутлăх.
Пĕр пысăк уçланкă, çурт...
Унта эсĕ кĕр те вырт!
Анчах эп кĕмерĕм, выртмарăм,
Хăна пек пулса курмарăм.
Пачах урăх çут тĕсесе,
Çӳретĕп халь ас илсе...
Ăçта-ши вăрман, ăçта-ши çав çурт,
Пырса кĕреймес тепĕр хут.

* * *

Хурăн мĕнне пĕлетĕп,
Ăçта çӳресен те килетĕп,
Шурă вăйне илме...
Ун пек тасан та вăйлăн
Манăн утасчĕ татах!
Çуттăн утасчĕ уй урлă,
Ун çутине курсах!
Атте пек мана сăнатăр

Çӳлтен кăн-кăвак тӳпе!
Тен, пултăр кăвак хуппи пек
Шур хурăнăн çулçи?
Эпĕ кунта тӳсни
Юлтăр манра кун тăршши...

* * *

Тĕнче усаллансах çитсен,
Чăваш çитет ăна çăлмашкăн.
Тен, çавăнпа, чăваш килсен,
Шуйттан хăрать – вăл та пурнасшăн!
Чăваш, ак, кирлĕ пулчĕ те
Тĕнче тасалăхне тумашкăн.
Ăна малтан, пылчăк тесе,
Пит юрататчĕç таптамашкăн...
Ак, вăл çĕкленчĕ çĕр çинчен
Чăн Улăп пек тепре курнаслăн.
Ăна курнать пуль пĕлĕтрен –
Эпир халь пĕчĕк çеç юласлăн.
Халь вăл пуçлать хăйĕн ĕçне,
Вăл вăй тупать пире çăлмашкăн.
Çук, вăл килмен çак тĕнчене
Хăй сассипе çеç хăратмашкăн.
Çук, кирлĕ мар унран кулма,
Вăл, Турă пек, чăнах айванлăн
Хăйне пĕтерĕ чăнласа,
Пире çăлас тесе хăватлăн...
Кайран, ак, калăпăр, ăçта
Пире çав çăлакан тăванăм?
Тăрать, ак, ĕнсине хыçса
Тĕнче хăйне хăй ăнланмасăр.

* * *

Пĕлĕте çиçĕм çурать,
Çумăр пит çемçе çăвать.

Улмуççи çеçке çурать –
Çеçкипе вăл мĕн тăвать?

* * *

И.Я. Яковлева асăнса.

Эс килнĕ чух çак тĕнчене
Тĕнче, тен, хăйĕнчен хăрарĕ?
Чăваш килет, чăваш тесе,
Тен, ĕнсине те хыçкаларĕ?
Чăнах та, мĕншĕн-ха тĕнче
Халь те хăрать, чăваш тесессĕн?
Чăвашăн сассине илтсен,
Хăйне туять пуль вăл пĕтеслĕн.
Чăнах та, çапла мар-и-ха
Пулса иртсе тахçан асаплăн?
Чăваш та çын пулма хăйса,
Хăйне тытса ытла хаваслăн...
Ак, халь те Яковлев пекех
Хăй çеç талай пекрех курнасшăн.
Тĕнче ăна, кăшт чĕтренсе,
Хăйĕн пекрех туса хурасшăн.
Хăйĕн пекех, кăшт шуйттанла,
Чăваш та пĕттĕр, тет, пĕр сассăр.
Анчах чăваш чăн турăлла
Хăйне тăвать пĕр хăрамасăр.

* * *

Кăлăп чăххи пек çурхи вĕрене
Пусса та кăларчĕ хăй чĕппине.
Шип-шип! текелет вăл, симĕскер,
Тин çеç чĕпĕ пек тухнăскер.
Ăна халь хуплас та пăхас пулать.
Пăхмасăн килет те, ак, çилĕ туллать,
Е сивĕ шур юр тепĕр хут, ак, хуплать.
Сип-симĕс çуначĕ вара аманать.

Пăхса та тăрсассăн, çунатлă пулать.
Хĕвел пек вара çав чĕпĕ ларать –
Çурхи вĕрене чĕп кăларать.

* * *

Ачаш акаци пĕр сăмахсăр
Сип-симĕс çепĕç чĕлхипе
Тем систерсе мана каларĕ:
«Килсем татах, килсем ирпе...
Ун чух сана эпĕ кăтартăп
Чи хӳхĕм ырă сăнсене.
Эпĕ сана кĕтме пуçларăм
Юрсем кайса пĕтсессĕнех.
Эсĕ вара нумай кĕттертĕн...
Паян кăна утса кĕретĕн
Тахçан çӳренĕ сукмакпа»
Ачаш акаци, эпĕ сансăр
Тăрса юлса-çке, чăн та, сăнсăр.
Сăваплă сăмахна тăнлатăп,
Сан умăнта чĕркуçленетĕп,
Мĕн пулнине аса илетĕп:
Сар чечеке ларсан çӳренĕ
Пыл хурчĕ евĕр пыл ĕмсе.
Акаци хутаçне шутланă,
Пĕр-иккĕ мар, виç-тваттă хыпнă
Купăс каланă пек туса.
Шăхлич каланăшăн вăрçатчĕç,
Илтесшĕн марччĕ ватăсем.
Эпир вара, ача темерĕн,
Купăс калаттăмăр темччен.
Çапла шăхлич пек шăхăрса
Теллейĕм иртрĕ пулмалла.
Пĕрех мана акаци патăн
Çурхи кунхи юратăвна.
Тен, çавăнпа пĕрмай килетĕп

Кун таврăнсан эп сан пата.
Каллех пулать санран кĕтетĕп
Шăхлич пек сасă парасса.
Анчах эс темшĕн шарламастăн
Сип-симĕс çепĕç чĕлхепе.
Пĕр-ик сăмах кăна илтесчĕ,
Килсе ларсамччĕ ман çума...
Эпир пĕр-пĕринпе часах
Пуçлатпăр пулĕ пурăнма.
Халь ватăлса çитсен кăна
Ăнлантăм пулĕ сан чунна.
Çавна каларăн пулĕ эсĕ,
Çавна эп илтрĕм пулмалла.
Апла пулсан, тавах, ир кӳлĕм
Килсе çӳретĕп пуль-ха ӳлĕм.
Акаци чечеке ларсан,
Акаци шăхăрса ярсан...

* * *

Çеçке сарнă çулпа
Чĕвен тăрса утрăм пулать –
Ан тивĕр мана, çеçкесем!

* * *

Шăлан çак тĕлте ӳсетчĕ,
Тем чухлĕ телей кӳретчĕ.
Эпĕ те çав çӳреттĕм,
Шăлан ăçтине пĕлеттĕм.
Пĕчĕк ача пек кулаттăм,
Сикеттĕм те тухаттăм
Хамăр енчи урама
Çав шăлана курма.
Çеçки унăн питĕ кĕренччĕ,
Çулçи пурçăн пек çемçеччĕ.
Шăрши те, шăршийĕ – Туррăн,

Тĕнче çав шăршпа тулнăн...
Халь ун патне пыманни
Çĕр çул та пулĕ иртрĕ...
Чун та йăлтах кӳтсе çитрĕ...
Якăлт! кăна сиксе тухрăм
Эп тепĕр хут çав тĕле...
Шăлан ман, мана пĕлмен пек,
Пăхрĕ тата тĕлĕнсе...

* * *

Пĕр сад çумĕпе сукмак.
Пырса та кĕме май çук.
Пур пек çавăнта çăтмах,
Шала кĕрсе пынă чух.
Шалта-мĕн, чăнах, пысăк çул.
Унта кайăксем тем чул
Вĕçес пек лараççĕ кĕçех –
Унта юмахри пек чăнах!
Çӳлтен майĕпен çумăр пек
Çăвать ахах евĕр чечек.
Ахах çул çинче, тум çинче
Чечек çăлтăр пек çиçет.
Ал ик айккинчен çупăрлаççĕ
Тем çӳллĕш вĕренесем...
Ак ĕнтĕ пĕр çил чуптарчĕ,
Çĕклерĕ çеçке темĕн чул.
Çак çил юмах пек каларĕ:
Кунтах эсĕ тăр та юл!
Кунтах эсĕ тупăн çăтмах!
Анчах та кунтан тухсан
Çухалĕ çăтмах çавăнтах...
Чăнах та, пĕр утăм çеç турăм,
Тухса та ӳкетĕп таçта.
Эп сад хĕррипе пыратăп,
Шыратăп темле сукмака...

Анчах нимĕнле пĕр сукмак та
Нимле сад хĕрри те çукрах.
Апла, тет, вара эп ăçта?

* * *

Сивĕ çумăр çуса кайрĕ,
Юр та ӳккелерĕ...
Çеçкине тин çеç кăларнă
Чие ӳпкелерĕ...
Ĕнтĕ çырли хĕрелмелĕх
Ăшă тек пулмарĕ.
Тĕнчене сив çил пĕтерчĕ –
Чие чăтаймарĕ.
Пахчари сив çĕр çинче
Çеçке пылчăкланчĕ.
Ман чуна пиçсе çитме
Çакă кирлĕ марччĕ!

* * *

Пĕлĕтпе ылмашлă
Çут хĕвел те пур.
Унпала юлташлă
Манăн чун та пур.
Çулçă сарчĕ хурăн
Ĕлĕкхи пекех.
Çĕрĕпех те урнă
Çилĕ çук текех.
Халĕ, акă, кайăк
Пĕр çавра юрра
Кăларать хăй майлă
Савăнса тăрса...

* * *

Кунран кун турат хушнă хурăнăм,
Сан пекех эпĕ йывăçăн курăнтăм...

Çулçăма сар хĕвел тем çырчĕ,
Çырчĕ-çырчĕ те тем ывăнчĕ.
Халь çавна вуласа ларатăп.
Çур енне çырнă, вĕçне тăм тивнĕ,
Каярах тата юр та витнĕ...
Çав тĕлте ку çыру лӳчĕркеннĕ...
Ăна сив çилсем пĕтерме пикеннĕ!
Пĕрех пайăрка çавă çулçă çинех
Çырнă та çырнă çине çинех...
Акă çу кунĕ, шăрăх та вăхăт,
Çимĕк çитсен, иртет питĕ хăвăрт!
Çав тĕлелле çырса та пĕтернĕ,
Ман патăма илсе те çитернĕ...
Эпĕ вулатăп ăна майĕпен.
Ĕнтĕ çу иртрĕ, килет кĕркунне.
Эпĕ пĕлместĕп мĕн килнине!..
Сарă хĕвел тек çырмасть çырăвне,
Никам та пĕлмест çыру асапне.
Вăл майĕпен сарăхать, кушăхать.
Халь тин кирлĕ мар, çуккă пулать.
Кайран та вара тур çырнă çыру
Çĕре те ӳкейĕ... Таптать сан уру!
Ун чух çĕклесе те пăхсам ун çине,
Турру çырса янă çыру йĕркине.

* * *

Аслати çапать те çĕр çăтать пуль тетпĕр
Çакă çĕр çинчи те çылăх çынсене.
Çумăр çунă хыççăн аслати иртет те
Тасалать, ак курăр, çакă çут тĕнче.
Çĕр çинче çӳретĕп, пур манра çĕр çылăх.
Анчах çĕршĕн эпĕ пĕртте йывăр мар.
Çавăншăн мана вăл çапмалла тем чухлĕ,
Çылăхшăн çак пĕлĕт çапмалла паян.
Йывăр пулас çук çав çылăх тенисем!

Эпĕ тунă çылăх пĕлĕт пек çăп-çăмăл,
Пĕлĕтпе пĕрле те вĕçсе кайрĕ пуль...
Хам та вара эпĕ аслати пек вăйлă...
Çавă çылăх пулĕ, çумăр пек çăватăп.
Çавă çылăх пулĕ – аслати çапать,
Çăтас тенĕ çĕр те кăкăрне уçать...
Çавăнпа пуль чунăм питĕ савăнать!
Аслати çапать те çĕр çăтать пуль тетпĕр,
Çĕрпе пĕлĕт хушшинче аташса çӳретпĕр –
Çавăнпа таса пуль çакă çут тĕнче!

* * *

Çутă çăвать, хĕвел çăвать,
Пурнăç çăвать çĕр çине.
Çутă хăй вăл вăрлăх пек,
Ăçта ӳкет – çĕр пулать!

* * *

Ĕнтĕ юрĕ, эс каларăн
Чун мĕн туйнине.
Эс мана паян суймарăн,
Пĕлтĕм чăннине.
Уншăн та пулин таятăп
Айăплă пуçа.
Параймарăм эпĕ ним те
Савнă çыннăма.
Нимĕнле машин та çуккă,
Нимĕнле хваттер...
Пурпĕрех телейлĕ эпĕ –
Юратап çавтер!

* * *

Таçти уçлăхри çăлтăр ушкăнĕ евĕр
Шăлан çеçкере.
Пыл хурчĕ темле хăйне евĕр ракетăн

Вĕçет ун çине.
Никам та унта пур тесе шутламасть пуль
Хăйне пĕр тĕнче.
Çеçки çул хĕрне тăкăнсан та курмасть пек
Тĕнче пĕтнине.
Пĕрне, ӳксенех, çĕклесе те пăхан та
Темле туйăнать...
Тaçти уçлăхри çăлтăр ушкăнĕ евĕр
Шăлан пурăнать.

* * *

Шур карапсем вĕçеççĕ урамра.
Пĕри вĕçсе кĕрейрĕ ман пата.
Шалта ларать вĕçевçĕ хуп-хура.
Çуначĕсем шап-шурă, тупата!
Ăçта вĕçсе каятăн эс, тăван?
Мĕнле телей шыратăн паянтан?
Çил майăн çĕкленсе илет карап,
Вăл çĕр çинче темскер шырать...
Ун вĕçмеле паян инçе-инçе...
Май килнĕ чух çĕклен çӳле!
Пĕр шухăш пур, мĕн чухлĕ çӳлерех,
Вăл çавăн чул ӳкет пуль тĕплĕнрех!
Вĕçех, апла, çӳлтен-çӳле çӳре,
Эс вĕçнине пăхса тăрать тирек.
Сан хыççăн вĕçтерет пин-пин карап,
Кашни хăйне валли шырать тĕрек.
Пĕри кĕрет ман пӳлĕме вĕçсе,
Ун пурнăçĕ, апла, килет пĕтсе.

* * *

Мамăк вĕçет...
Тирек айĕнче шурă вырăн.
Эпир, ачасем, çавăнта
Пуçелĕк тăватпăр.

Пит чаплă çынсем пек выртатпăр,
Вĕçетпĕр.
Шур пĕлĕт пек эсĕ ху та!
Таçта аякра пĕр вăрман.
Нихçан та пулман!
Таçта аякра эп вуланă юмах.
Выртать пĕр ача.
Тирекĕ шавлать,
Мамăк вĕçет.

* * *

Пурăнасчĕ лăпкăн,
Пурăнасчĕ шăппăн,
Чун çеç илтмелле.
Мĕн тума вăрçма, тет,
Пирĕн килмелле?
Пурнăçри юмах пек
Вăрттăн курăнасчĕ,
Чечек пек пĕлесчĕ
Вăрттăн пуç тайма.
Хĕвелпе пĕрле те
Çутатса çӳресчĕ,
Тутлă тĕлĕк евĕр
Кăмăла тупасчĕ...

* * *

Сар вăрă Икар пек каллех
Хĕвел патнеллех ыткăнать –
Ӳкет те çĕре
Таптанать.

* * *

Ирпе пуçланать чĕкеç карусель.
Унпа ярăнма çăмăлрах-мĕн!
Хăех илсе кайĕ сана çӳлелле,

Çĕре çеç ӳкетĕн ху тĕллĕн...
Чир-ик! тет асам карусель,
Теме ас илтерчĕ...
Эп пĕчĕккĕ пек, темле ярмăркка!
Шăхлич сассипе ман тулчĕ хăлха.
Круççель çавăратăп эп юлташпа.
Чăнкăр та чăнкăр!, тăнк та тăнк!
Вĕçеççĕ çынсем çĕр çийĕн таçта.
Эпир те вĕçетпĕр пулас çавăнта.
Эпир ярăнатпăр чĕкеç майлăрах.
Чĕр-ик! çеç тăвать круççель çаврăнса,
Чăнкăр та чăнкăр! ванать пек тĕнче,
Тунк-тунк! параппан çапать чĕререн.
Шăхлич шăхăрать тата хытăрах...
Хуçи тăсса ячĕ, хут купăс калать,
Тĕнче чĕкеçле калаçать...
Çӳле те çĕклет, çĕре пăрахать...

* * *

Ирхи сар хĕвел пек
Сар хĕр вăранать.
Ăçта-ши ман каччă,
Чĕри шухăшлать.
Каччи кĕттермерĕ,
Шаккать кантăкран.
Чие çырлипе те
Сăйласшăн пулать.
Перет пĕринпе те
Çут кантăк вара
Чĕре пек хĕп-хĕрлĕ
Çунать çавракан...
Чие панă сасă
Кĕрет хăлхана.
Хĕвел пек хаваслă
Тапать халь чĕре.

Чие çырли евĕр
Хĕр кусĕ çиçет.
Хĕвел евчĕ евĕр
Хаваслăн çӳрет.
Халь ĕнтĕ çырла та
Пĕр тутлă тута.
Пулать чуп тума та,
Пулатчĕ татма...
Анчах май килмерĕ
Пĕрле çӳреме.
Тен, вăхăт çитмерĕ?
Пĕрех вăл çĕтмерĕ –
Чие пана сас
Тăрать хăлхара!

* * *

Ăçта чĕкеçсем, чĕкеçсем ăçта?
Ĕнер çеç вĕçетчĕç унта та кунта...
Темскер каласа кăтартасшăн пулса,
Çак çĕр ытамне калăплатчĕç кăна.
Халь тин вара шăп. Ăçта чĕкеçсем,
Ăçта чĕкеçсем çавăран карусель?
Хĕвел те тăрать çаврăнса майĕпен,
Вăл та курасшăн чĕкеç вĕçнине.
Тӳпе вара шăп. Пĕр сас илтĕнмест.
Тен, чун тăнлама ман пĕлмест?
Ĕнер çех чĕкеç пек вĕçетчĕ-ха вăл,
Чĕкеç пек чир-ик! çеç тăватчĕ ирпе.
Халь ĕнтĕ вăл пушă. Чĕкеç çуккăран
Урам та темле курăнать пушăрах.
Çапла утнăçем майĕпен урампа
Туятăп хама та темле уксах пек.
Тен, паянтан чун çунни – çавă сас
Пурнать чăнласа чĕрере пĕр кас?
Унта çаврăнать чĕкеçсен каруселĕ –

Килес кунӑмсем ман чӗкеҫсемлӗ!

* * *

Таса мар хула ку. Таса мар урам.
Кашни кун утатпӑр, пире ним те мар.
Ҫул ҫинче пӗтетпӗр, пурпӗрех ҫӳретпӗр,
Ҫакӑ урама та кашни кун ҫӳплетпӗр.
Ҫул ҫинче пӗр вырӑн, пӗр ката пекки.
Пӑрӑнса кӗмешкӗн вӑхӑт ҫуккӑ-ши?
Тап-таса сукмакӑн икӗ айккипе
Йывӑҫсем ӳсеҫҫӗ талккишпе...
Темӗнле ҫӑтмах пуль, темӗнле сӗт кӳлӗ?
Утнӑҫем, ҫын чунӗ киленет тем чухлӗ.
Ҫил ҫинчи ҫут ҫулҫӑ ачашлать мана,
Хӗвелпе тӗрленӗ ҫулпа ут кӑна.
Кайӑк та сас пачӗ эпӗ утнӑҫем,
Чун тата ҫӗкленчӗ ҫакна илтнӗҫем.
Ҫул ҫинчех хӑй тӗллӗн чунӑм тасалать.
Сукмак вӗҫӗнче те ҫутӑ курӑнать...

* * *

Ҫын кашни кун хӑй шӑпине суйлать.
Кашни ҫӗрте ҫӗр тӗрлӗ ҫул курать.
Ҫул юппинче пӑхса тӑрать чӑваш.
Ҫав самантра вӑл мӗн ҫинчен шутлать?
Ҫав ҫулӑн юппинче пур ҫул Турри,
Ҫул ҫаврине тӗрӗслесе пӑхса ларать.
Пӗр вӑл кӑтартнӑ ҫулпала кайсам,
Кайсан вара укҫа хурса хӑвар...
Ҫула тухас чухне те кӗл тӑвар...
Ун пек тумасанах аташтарать шуйттан,
Ӑса пӑтраштарса ҫултан пӑрать...
Кашни самант кӗтет пире пӗр ҫул.
Ӑна суйла та ху та Турӑ пул!
Никам утман ҫулпа утсан аван,

Эс ун чухне чăнах чăваш пулан!

* * *

Çулçă çӳлтен ӳкрĕ çĕре.
Тытас, ӳкме парас мар!
Тăсрăм алла... Çук, тытаймарăм.
Ӳкрĕ çĕре, симĕскер.
Халĕ ĕнтĕ вăл та...

* * *

Кĕркунне шăрши!..
Пур çĕлен ăшши.
Сарă çул çинчи
Çил те йăпăлти.
Çулçă лăп! ӳкет,
Чĕрене тивет...
Кĕркунне çитсен,
Пурăнас килет!

* * *

Сар çулçă çине çырса хунă:
«Вилĕм те питĕ илемлĕ»...
Кĕрхи кунсене туйнă чунăм
Çĕлен ăшшипе киленчĕ...
Хĕвел юлашки хут тухнăн
Кĕрхи чечексем çуталчĕç.
Татма тесе эпĕ пытăм –
Вĕсем те йăлтах çухалчĕç...
Çапах та чечек те çулçă
Тур панă пулсан – пулччĕр.
Илем çуратан сарă çулăм
Ман чунăма та куçтăр!
Кĕрхи çак сар çулçă пек эпĕр
Вилме халь хатĕрленетпĕр.
Кайран пирĕн хыççăн килĕç,

Калĕç: «илемлĕ вилчĕç!»...
Ун пек чух кайма та юрать пуль –
Тур хушнинчен иртес çук.
Пире вăл чечек пек курать пуль –
Чечек вăл вара пĕтес çук!

* * *

Ылтăн çулçă сапнă çĕр çине
Çĕрĕ-çĕрĕпе çут çăлтăр çурĕ.
Ак, алла илсен пĕр çулçине,
Асăрхатăн: хура пăнчă юлнă!
Çăлтăр ӳкнĕ вырăн çавăн пек:
Хуп-хура та таткаланчăк, шăтăк...
Çавăн пек çăвать-ши вара çăлтăр,
Çĕр çинче выртса çапла пĕтет?
Типсе çитнĕ те вăл халĕ питĕ
Вут хыпас пекех вĕт курăнать.
Çĕрĕпе çапла çулу çапса ларсан,
Çулçă пек çунса тухать çĕр пичĕ...

* * *

Кăвак çутă ӳкнĕ чӳрече çине.
Пулас кун вылять пуль хăйĕн куçĕпе?
Мĕлкесем сикетчĕç сиккипе унта,
Кайăк килсе пăхрĕ ирхи кăмăлпа...
Ним те мар пек ĕнтĕ – чӳрече кăна.
Вăранма пуçланă пурнăç çавăнта...
Вăрттăн çеç курнать те вăрттăн çухалать.
Чăн малтан шуйттан пек сăнĕ курăнать,
Куç хĕссе пăхать те питĕ хăратать...
Каярах Турри те курăнса килет,
Кăвак çутипе те чуна илĕртет –
Халь мĕнле çак кантăк пурнăç ӳкерет?

* * *

Ĕнеркаç çеç тӳпере
Çăлтăрсем вылятчĕç.
Çĕрĕпе çӳре-çӳре
Юрату пиллетчĕç...
Ирпеле вара таçтан
Çумăр килсе çапрĕ.
Çул çинче, çӳлтен пăхсан,
Çăлтăрсем выртатчĕç...
Сарă тĕслĕ те кĕтеслĕ
Самантрах çунса пĕтеслĕн
Каçхи çăлтăр пек пулса
Ман çула çутатрĕç.

* * *

Вăрман – чиркӳ евĕр çурт.
Турри те – ват юман.
Паян кĕлт кĕрсе тухас,
Ман кĕтнĕ хăна пулас.
Вăрман ăшшине туяс...

* * *

Ĕмĕрсем çухалса иртсен те
Мĕн пулни тепĕр хут килет.
Тахçан пуранна Нефертитти
Чăваш хĕрĕ пек, акă, çӳрет.
Чăваш хĕрĕ пекех вăл сăпайлă,
Фараонăн майри те мар.
Фараон пек эпир пулман мар та
Юмахри пек пĕрех туйăнать.
Ун тути чуп туса, тен, курнă
Пирамидăри пысăк Турра?
Хăй те, тен, çавăнпа турра тухнă,
Ас илет авалхи пĕр юрра.
Ун юрри тахçанхи, ку паллă,

Ман анне те çавнах юрлать.
Фараонăн тĕнчи çухалсан та
Нефертитти пĕрех пурăнать.
Ларса килнĕ кунта, курса тăр-ха,
Çирĕп пулнă сăвар лаши.
Унпала халь пĕрле мĕн тăвар-ха,
Авалхи ташшиех вĕт ташши.
Пĕр юрларĕ те хытă ташларĕ,
Илĕртес терĕ пуль чăваша.
Эп вара фараон пек шутларăм,
Нефертитти ман арăм пулать!

* * *

Ахалех эп хуçрăм йывăç туратне.
Унăн ӳсмеллеччĕ вăрман хӳттинче.
Кĕркунне пуль терĕм, кирлĕ мар ӳсме,
Илемне кăтарттăр ваза ăшĕнче.
Сарă тĕслĕ çулçă тĕлкĕшет кăна,
Унăн çунмалла-ха, ун пурăнмалла...
Хăйĕн асапне те кăтартмасть мана,
Вазăра та халĕ тӳрĕ тăмалла.
Кĕркунне çапла вăл – хуçăлать турат.
Туратăм пулсассăн, пурăнма пулать!

* * *

Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçсе анчĕ
Çулçă пек ман чун.
Çĕр çине ӳксен лăпланчĕ –
Килчĕ çĕнĕ чун!

* * *

Лапка-лапка юр çăвать,
Мулкач сикет йĕр тăвать.
Аса килчĕ çак юмах,
Чӳречерен пăхсанах.

Кĕркунне çул кукăр-макăр,
Урамра чупать вĕт-шакăр.
Шурă юрĕ çунă май
Курăнать тĕнче самай.
Кун пек шурă-шурă тĕк
Нихăçан та çуман пек.

* * *

Чуна шурă юр ӳкрĕ пулас?..
Тин ӳкнĕ шур юр тап-таса!
Анчах таврара хура кĕр,
Тăвать вăл таçта тĕпĕр-тĕпĕр...
Унта çулçăсем, йĕпенсе пĕтнисем...
Вĕсем те ĕнер пит аванччĕ!
Çил майăн вĕçетчĕç...
Ман чун та пĕрле
Таçта вĕçсе кайрĕ-ши сĕм çĕрле?
Ирпе ирех тăтăм, куратăп, шур юр,
Пĕр пĕчĕк «улпутăн» çав савăнăç пур.
Юр çулçă çине ӳкнĕ пулсан та
Сап-саррăн татах курăнать-ха...

* * *

Эп пурăнап никама курăнмасăр,
Пур-и, е çук – никам та пĕлмест.
Çил евĕр ирпе пите сĕртĕнетĕп,
Каçпа хура тĕм сăна пытарать.
Юр çине пусрăм – йĕр юлчĕ...
Йĕр куртăм та питĕ тĕлĕнтĕм.
Эпĕ иртнĕ çĕрте те йĕр юлать!
Йĕр хывнă юр та мĕн чĕрĕ!
Кĕтеп каçченех йĕр пĕтиччен,
Тепре çак ирпе юр çăвиччен...
Унтан тин каллех тепĕр хут
Йĕр тăвăп çĕн юр çунă чух!

* * *

Эс çак пулăма кĕтнĕрен-и,
Эс çак илеме туйнăран-ши,
Тĕнче хăй чунне уçса пачĕ.
Çĕре пирĕшти, тен, анчĕ?
Ун, чăн та, пур икĕ çуначĕ!
Мана кайăк пек çупăрларĕ...
Чăнах та хĕвел пек сăн-пичĕ
Сăпка сиктерни пек çиçрĕ...
Тĕнче халь чăнах пирĕштиллĕ –
Пулатпăр эпир те ăшпиллĕ!

* * *

Ирпе тăтăм та куратăп...
Асаннен пӳрт тăрринче
Качака çӳрет çӳлте.
Сиксе анчĕ якăлт! çеç.
Мăйраки ун питĕ авăк!
Пичĕ-куçĕ питĕ савăк!
Шур çăмне силлет-силлет те
Шурă юр ӳкет çӳлтен.
Шурă урипе тапать те
Пăрлă йĕр юлать çĕрте.
Эп ăна пит юрататăп.
Пĕр ытам тип курăка
Аслăкран илсе паратăп.
Мĕншĕн-ха пăхса тăратăн?
Курăка та вăл çимест,
Мекекек! теме пĕлмест.

* * *

Ура тĕпне шуç çапнă пуль –
Шуçтарса çӳрерĕмĕр...

Кирлĕ мар пире тумхахлăх,
Кирлĕ мар чăнни!
Шуçтарма кăна пĕлесчĕ –
Урăх мĕн усси?

* * *

Лăпкăн тапать чĕре.
Кĕретĕп пулас кĕре.
Лăпкăн çăвать юр,
Тем какалать хур.

* * *

Ӳкрĕ пилеш юр çине.
Кĕчĕ пуль чун тĕнчене...

* * *

Пĕчĕк çеç телей эп тупрăм.
Шурă юр пусса эп утрăм.
Çĕнĕ юр шур мамăк пек,
Утса пăх-ха, тенĕ пек...
Утса кайăттăм татах,
Тупăттăм чăн-чăн çăтмах.
Ах, анчах халь кĕмелле,
Çак çуртра ĕçлемелле...
Кунĕпе пăхса та ларăп
Кантăкран урамалла.
Çак сăвва çырса хăварăп,
Шур юра ас тумалла...

* * *

Çакă тĕнчен сив куççулĕ
Хĕл кунĕнче пухăнать.
Çутă та ăшă çур кунĕ
Пӳрт тăрринчен тумлать.
Çав ĕнтĕ хĕл кунĕн куççулĕ...

Ĕçсессĕн вилме пулать!
Чĕр шыв пек таçта пулĕ...
Шăнтсассăн вăл пăр пулать.
Анчах эп пĕрре хăрамасăр
Çав çут пăрлака ĕмеп.
Çынна пĕр сăмах каламасăр
Чунпа вăрттăн çех вĕçеп.
Пăр кайнă чухне пăлтăр-палтăр
Шыв çаврăнкалать.
Хĕл кайнă чухне, паллă,
Тĕнче чĕр шывпа тулать.

* * *

Каç пулса килсессĕн, сар хĕвел ансан,
Сĕм авăртан тухнăн туйăнать пĕр çын.
Пĕр путать те хăвăрт пĕр тухать ун пуçĕ,
Пĕр хăрать те пулĕ савăнать ик куçĕ.
Аллисем хăлаçланаççĕ асат хуçнă пек,
Урисем лĕнчĕр каяççĕ вăйĕ пĕтнĕ пек...
Саланса ванса каяс пек тăчĕ ку тĕнче,
Хура вупăр пусса хучĕ çĕрпе пĕлĕте...
Сывламасăр тенĕ пек вăл халь пăхса выртать,
Пĕр сас-чĕв те кăларма та çĕр хута хăрать.
Хăй хăрать пулсан та вăрансах пырать.
Хĕвелпе пĕрле тăмалăх çутă вăй пухать.
Хĕвел ялт! çеç тухтăр, пулчĕ те вара!
Пулчĕ вара пурнăç, пулчĕ тăрă кун.
Тĕнче сирсе ярĕ ĕмĕрхи ыйха...

* * *

Пĕр шыв тĕлĕнче çутă,
Пĕр хум çиййĕнче тĕнче.
Пултăм унта эпĕ пулă,
Çунтăм пĕр çут хуппинче.
Пулли вăл тытмалăх çукчĕ,

Пĕр йăпăлкка анчах.
Пĕр чул айĕнче пурччĕ...
Халь курăнмасть пачах!
Ăна халь тытса пĕтернĕ.
Ăна халь шырас пулать!
Акă, вăл чаплă тĕрленчĕк!
Тăрă шывра выртать...
Тыт-ха ăна кăшт савмалăх.
Хуппи майлă кăшт ачашла.
Тĕнче те вара пурăнмалăх
Туять пуль хăйне урăхла.

* * *

Çак пурнăç, паллах, патак мар...
Пĕрех хăрататъ, çавăнпа та
Çӳретпĕр эпир питĕ шăппăн.
Шутлатпăр: «Эпир паттăр мар!».
Тата çакă пурнăç пурришĕн
Эпир çапăçса та курман.
Чăвашăн, калаççĕ, нихçан та
Пĕр чĕптĕм тăшман та пулман!..
Çапах пурăнса курман мар та,
Пĕлетпĕр мĕн пур-çуккине.
Патак пек хытса тăрсан та
Туятпăр тĕнче таппине.

* * *

Пĕрре хыт çĕрте ташлатăн,
Тепре йĕр туса ашатăн...
Çил вăтăрать вăхăтран,
Хĕве юр кĕрет ăнсăртран...
Вара сыхланса пек пыратăн,
Пуçа çиле май пăркалан.
Çил майăн килен çынсене
Пуçа кăшт пĕксе ăсатан...

Епле тепĕр чух хитре
Тĕл пултăм пĕр çамрăк хĕре.
Е тепĕр ват çын аран
Ӳкес пек утать ураран...
Тем тĕрлĕ тĕнче таврара.
Пуçа пĕксе утнă май
Курмасăр юлатăн нумай.

* * *

Хупса хунă кайăк евĕр
Пӳртрех пурăнса ирттеретпĕр.
Йăлтах ывăнса çитсен,
Тула кантăкран пăхатпăр.
Ах, лайăх та чĕрĕ тĕнче,
Пуласчĕ çемçе аллинче!
Çӳресчĕ хитре пахчара,
Пуласчĕ чăн-чăн ачапча!
Пăхатăн çапла кантăкран,
Шутлатăн кăштах тарăхса:
Тен, çын та çак çурт майлăрах!

* * *

Тĕнче пĕтет тенĕ чух
Чăваш чунĕ мĕн шутлать?
Пурăнмалăх мул пухать,
Кунĕн-çĕрĕн тăрăшать...
Анчах вăхăт иртет те
Вылямалăх шак чул çех
Ун аллинче курăнать.

* * *

Ĕнтĕ эпĕ йывăç мар та...
Урăх тек ӳсеймĕп.
Эпĕ халĕ ватă çын пек
Пуç пĕксе çӳретĕп.

Кун килсе иртсе кайсан та
Пěртте савăнмастăп.
Е пěр симěс çулçă пур-тăк,
Çулçăпа вылятăп.
Хěвел тухнă чух ача пек
Йăлл! кулса тăратăп.
Çав анчах. Халь ěнтě эсě
Кун çинчен пěлетěн,
Ман валли çак тěнчене
Çěклесе килетěн.
Ěнтě эпě, йывăç мар та,
Пурпěрех çулçи пур!..

* * *

Хěвел çутипе çуталнă юр
Тěнчене урăхла кăтартрě...
Тěнче-мěн тěлěнмелле шурă!
Çынсем те юр айнех юлнă...
Тен, çынсем те юр пěрчи пек
Таçта йăлтăртатаççě пуль...
Паян, тен, çынсен çут чунě
Çӳлтен ман çине çурě?

* * *

Çак çул çинчех эпир тупнăччě телей.
Телейě ěнтě вăл пěр вěренеччě.
Çул хěрринче ӳссе ларнăччě пěр енче.
Унпа киленеттěмěр кунсерен...
Эп ун çинчен нумай сăмах калагă,
Ак, халь вара çав вěрене йăваннă.
Текех вăл чечеке ларас çук.
Ун вуллипе пěрле эпир уçлăхра вěçес çук.
Ун хăрнă туратне тытса пăхатăп,
Хама çав вěрене пекех туятăп.

* * *

Çумăр хыççăн питĕ хăвăрт
Çĕнĕ курăк шăтса тухрĕ.
Халĕ ĕнтĕ пурăнатпăр,
Курăк пек çĕн ӳт хушатпăр.
Эпĕр халĕ, чăн та, курăк.
Таптаса ватса ан хурăр!
Çил çинче ӳсетпĕр хăвăрт,
Ӳснĕ чух ларатпăр шăпăрт.
Куç умне пĕр чĕр хĕлхемĕн,
Çĕр чĕлхеллĕ çĕр çĕленĕн
Шăтса тухнăн курăнатпăр...

* * *

Чир-чĕр ерсен çĕре кĕрес пекех
Пăхса çӳретĕн çĕрелле...
Уйран уçланă чĕресри пек
Шап-шурă сурчăк услам çу пек
Чĕлхе вĕçне кăшт ӳккелет,
Çĕре сурса та пăрахсассăн,
Çăмăлтарах пек туйăнать...
Вара кăшт намăс пулнă пек
Пăхса илетĕн çӳлелле...
Çӳлте, кăвак çеç тӳпере
Шап-шурă пĕлĕтсем çӳреççĕ.
Вĕсем те, тен, услам çу пек
Кăвак чĕрес тĕпне ӳкеççĕ?..

* * *

Çулçă ӳкрĕ çӳлтен майĕпен...
Ӳкнĕ чух эс ăна хăвăрт тыт!
Сан аллу çине ӳкнĕ чухне
Вăл темле савăнса чĕтренет.
Эп ӳкмерĕм, пĕтмерĕм-ха, тет.
Пĕр самант, тен, пĕр авăк шутлать,

Кам-ха тытрĕ мана, тет, пулать?

* * *

Çуркунне каллех ак килсе çитрĕ.
Тек килмест пуль тенĕччĕ, чăнах!
Шурă-шăрă çеçкепе вăл витрĕ
Ешелленнĕ çереме йăлтах...

* * *

Пире çак пурнăçра парса тет пĕр сăмах.
Çав сăмаха эпир пĕлетпĕр Турă пек.
Пĕр шутласан, тен, калăн: ку, юмах!
Анчах та эпĕр пур. Апла, çак тĕнчепе
Тахçан авал сăмах та пулнă чăн хуçа?
Çак тĕнчене вĕрсех, тен, тунă пуль?..
Халь тин эпир çак сăмаха пĕлетпĕр,
Тен, çавăнпа Турă пекех çӳретпĕр...
Çак тĕнчене, тен, эпĕр тепĕр хут
Пĕр-ик сăмах хушса туса хуратпăр?

* * *

Мĕн ĕнтĕ вăл машина?
Тем калаçаççĕ...
Шупашкар паркĕнче пĕр тĕлте
Шăпчăк юрлать ирпе.

* * *

Çак чиркӳ пек пĕчĕк сквертан
Иртме пултарайман, паллах.
Шăпчăк сасси те хăлхана
Хăй тĕллĕнех кĕрсе тулса...
Пин çулçă алă çупнине,
Турачĕсем суланнине
Чунсем илтсе кăштах, паллах.
Тен, çавăнпа та халь çынсем

Туяççĕ хăйсене чипер?

* * *

Çу çитрĕ. Çитрĕ çуллă вăхăт.
Шыва кĕме чĕнет хăяхлă Сăхăт.
Çӳрет шывра вылявлă çутă пулă,
Пулă тытма пуçлатăп пулĕ...
Вăлта та пур, хулкки ак путрĕ,
Ку ăмана та пулă хыпрĕ.
Эп ача евĕр хыпăнса ӳкетĕп,
Çут пул тытма эп халĕ те пĕлетĕп.
Ку чух хулкки пит хытă ярăнсан та
Туртса пăхмашкăн эсĕ ан васка!
Пулли вăл пит чее. Хыпать кăштах кăна.
Кăштах тăрсан, çăтсах ярсан вара карт! турт...
Çиçет хĕвел çинче çупкам,
Çерем çинче авкаланать çăрттан!

* * *

Ирпе çапла пĕр юлташпа
Кĕтеттĕмĕр пĕтĕм чунпа
Хĕвел ирпе кăшт тухасса...
Пит сивĕччĕ çавăн чухне,
Ĕнтĕркесе пыраттăмăр...
Сасартăк, пĕр кĕтмен çĕртен
Хĕвел тухать çур пĕлĕт пек.
Çути ун хĕрлĕ мар, кăвак!
Тавралăхра темле сăвап.
Тен, калăн, темĕнле кăвайт
Чĕртсе пăрахнă çĕр хĕрне.
Унтан çунса килет тĕнче!
Пĕтетпĕр пулĕ тенĕччĕ,
Телей ыйтма та тăнăччĕ...
Пĕр самантран хĕвел каллех
Хăй сăнĕпех, пĕчĕк пекех...

Ăçта вара кăвак хуппи,
Ăçта ыйтни, ăçта телей?
Ыйтсан парать, тет, лав тулли!
Эпир вара икĕ айван
Тăратпăр унсăр та аван...
Кам курнă, тет, кăвак хуппи,
Телейлĕ, тет, вĕсен шăпи!

* * *

Эсĕ, çумăр, ăшă çумăр,
Çусан çу-ха вăйлăрах.
Çумăр айĕн чупса пытăм
Эп пуласшăн пысăкрах.
Ирпеле пăхса пыраттăм –
Хура пĕлĕт явăнать.
Çумăра эп кĕл тăватăп.
Эс пулсассăн, тыр ăнать!
Типсе çитрĕ тарăн Сăхăт,
Йывăç та вĕт сарăхать.
Çумăр чӳкĕ тунă вăхăт
Çитнĕ пекех туйăнать.
Çĕр шăрши çапать пит тутлă,
Урам тăрăх шыв юхать.
Хура пĕлĕт çичĕ хутлă,
Çавăнтан пуль шыв тухать?

* * *

Епле вăл аслă, çак çĕршыв...
Мăн асаттесем çӳренĕ çул
Илсе каять таçта çити...
Çук пуль, чăваш, тĕнче чикки
Ока енчен Урал таран,
Кăнтăралла Кавказ патнех
Çитсе тухса, тет, сăварсем –
Çитмен çĕр хăварман вĕсем!

Ак, халь те тухнă кун курма,
Тен, хăйсене кăшт кăтартма?
Вăй-хал та тупăнчĕ пулас,
Халь ма-ха чăвашран хăрас?
Пырать вăл ушкăнăн малта,
Çитет ларса хамăр ялта!
Енчен те ял çĕр кăвапи,
Ытти çĕрсем – чун ярапи!
Çитсе курас тесех тухас,
Тухса та çынсемпе пулас...

* * *

Пире усал тĕрĕслет,
Çырма тĕпне сĕтĕрет.
Эх, чупатпăр аялла –
Чупнă чух савăнмалла!
Шăпăр-шăпăр ал çупатпăр,
Ача евĕр йăлл! кулатпăр.
Питĕ лайăх, ах, анчах
Пурнăç мар-çке çырмара!
Упалентĕм тăвалла –
Пурпĕрех хăпармалла!
Эх, кулаççĕ пек манран,
Тăвалла хăпаранран.
Эй, ара, илемсĕр-çке,
Ку чăваш урасăр-çке!

* * *

Чĕре темле хăратнă пĕчĕк кайăк евĕр
Пĕр-тĕпĕр чух тапма та пăрахать пуль терĕм.
Таппи ун илтĕнмест. Тапсан та питĕ сассăр...
Анчах тем пек пĕтсе çитсен те эпĕ
Вăл пуррине туяп таçта шалта...
А, тен, унта та мар. Тен, аякра?..
Тапать-ха пĕтмесле...

Анчах ăна халь тем тусан та,
Пуçа çапса çурсан та, куçа суккăрлатсан та,
Нимле вăйпа та халĕ пĕтереймĕн!

* * *

И, шыв тулли, шыв тулли.
Çыран епле чăтать-ши?
Чĕре тапать, чĕре çунать,
Чĕре епле чăтать-ши?
Е каям-ши шывсем тăрăх
Шывсене хумхантарса.
Иртсе кайнă çамрăк вăхăт
Тек килмест пуль çаврăнса?
Çумăр çăвать тӳммен-тӳммен
Пĕр тăвăлса-чарăнса.
Çеçенхирти шурă хурăн
Ас илтерчĕ пек сана.

* * *

Çитмĕл те çичĕ çырма пуçĕнче
Хĕвелтен те çутă чечек пур.
Çавă чечек чăваш асĕнче
Килнĕ чăваш ун çутипе.
Ларса тухнă çырма тăршшĕпе.
Чечек ӳснĕ çăл куç тĕлĕнче,
Çăл куç тавра курăк ăшĕнче.
Унта çут ĕшнелĕхре
Хĕвел пек çурать пуль?..

* * *

Тахçанах пит кĕтнĕ
Сар çу кунĕ çитрĕ.
Каçĕ халь пит кĕтĕк,
Çăка питĕ сиплĕ.
Çăкасар шăршиллĕ

Тутасем те пыллӑ,
Чӗресем те ҫуллӑ...

* * *

Пусса ӑна хура тусан,
Ҫисе хӗвел шурӑ хутне.
Эп хам та пурнӑҫ майлӑскер,
Ҫак пӗтнӗ кӗнеке пекскер...
Йӑлтах кивелнӗ кӗнеке
Ман алӑра каллех тулать
Ҫӗн шухӑшпа, ҫӗн туйӑмпа...
Вӑл манӑн пурнӑҫа сӑнлать.
Хама куратӑп паттӑр пек!
Вӗт эпӗ паттӑр пек пӗрмай
Ҫӳрерӗм ҫӗр ҫинче нумай...

* * *

Чӑнкӑ ҫыран хӗрринче ҫӗр ишетпӗр.
Ухлатса, тусан кӑларса ӳкет ҫӗр татки аяла.
Эпир савӑнатпӑр, татах пысӑкрах ҫӗр татки
Тӗртсе яратпӑр.
Тата хытӑрах ухлатса, тусан кӑларса
Ӳкет ҫӗр татки аяла...
Эпир тата хытӑрах савӑнатпӑр.
Ҫара урасемпе кӑна ем-ешӗл ҫереме
Хиретпӗр-хиретпӗр те аяла тӗртсе яратпӑр.
Тепӗр чух хамӑрӑн та ҫав ҫерем ҫӗр ҫине
Ларса анса каяс килет пулмалла.
Ах, ахӑратпӑр. Эпир ҫырана ишетпӗр!
Эпир вӑйлӑ, эпир чаплӑ, эпир вӗт ҫӳлте тӑратпӑр.
Ҫӗр вара аялта...

* * *

Илтрӗм эп урӑхла темле сас.

Урамри çил лăпланчĕ пĕр кас.
Шăппăн-шăппăн каларăн темскер,
Эп ун пек сăмаха илтменскер,
Туйса илтĕм хама йывăç пек.
Çивĕ çумăр хытарнă пекрех.
Çав сăмах... эп ăна илтмен мар,
Ах, анчах халь мана кирлех мар.
Пурпĕрех кĕрхи кун çывхарать,
Кĕрхи çумăр каллех сас парать.

* * *

Сарă çулçă, сарă çулçă,
Сарă çулçă талса анчĕ.
Вăл хăйне çил евĕр курчĕ,
Унпала пĕрле ташларĕ...
Сарă çулçă, сарă çулçă,
Сарă çулçă вĕçсе кайрĕ.
Хĕвел евĕр ăшшăн çунчĕ,
Хытăрах тĕнче çуталчĕ.
Сарă çулçă, сарă çулçă,
Сарă çулçă выртса юлчĕ.
Сарă кун ытарлăн кулчĕ,
Сарă кун савни пек пулчĕ.

* * *

Ирпе йăлт шăнтса пăрахрĕ.
Ирпе пĕр ача чупкаларĕ.
Вăл пулчĕ-ши сарă хĕвел,
Е пулчĕ пите савакан сивĕ çил?..
Таçтан аса килчĕ таçти ăшă кил,
Унтан çаврăнса тепĕр хут эсĕ кил.

* * *

Нимле хуйхă та çук.
Ним те çук. Шурă тополь кăна.

Месерле çӗр çинче выртакан ачана
Вăл кӗтсе пăхса тăчӗ.
Вăл вара тӳпере
Пулса курчӗ.

* * *

Çӗр те пӗр тӗрлӗ тӗнче
Халь çуралать çак тӗлте.
Нивушлӗ вăл та пӗтет,
Нивушлӗ вилӗм килет?
Вилӗм килсен та кала
Çакă пӗр-икӗ сăвва!
Сăвă кусран пăхнă чух
Вилӗм тени ку чух çук!

* * *

Юр йăтнă йывăç пит хитре,
Юр йăтнă йывăç пӗлӗт пек.
Çил вӗрсенех вăл авăнать,
Çӗре шур юрӗ тăкăнать...
Вара эс ху та йывăç пек
Юр йăтнă та... хитре!

* * *

Мӗне курма пӗлет-ха ман чӗре,
Юр ларнă турата... тата хура çӗре?
Çӳлте çӳрет пас тытнă шур турат,
Çӗрте вара ман ӳт выртать.
Мана та çак çӗртен тунă пулать!
Мана та халь иртен-çӳрен таптать!
Тен, çавăнпа чӗре ман ыратать,
Тен, çавăнпа хăйне турат пекех курать?
Турат пулса тăрасчӗ ман кăштах,
Сив-сив хӗлпе пас тыттăрччӗ йăлтах!

* * *

Мĕн-ма мана эс куç пăватăн?
Мана пуç хĕрлĕ тăрататăн.
Леш тĕнчери пек халь пурнатăп,
Эп турă умĕнче тăратăп.
Каçар мана, чĕре туратлă,
Ăна эс чăннипех тухатнă.
Вăл пĕрре мар. Вăл халь тăваттă.
Мĕн кирлине вара – çухатнă!
Каçар мана, эп халь çунатăп.
Çылăх шутне картса ларатăп.
Телей тени кăштах çăватчĕ,
Халь тин ăна та тупаймастăп.

* * *

Çил çинче сив çилтен пытанса эпĕ пытăм,
Тен, санран пытанасшăн эп пултăм?
Çил вĕçсе кĕчĕ пуль, уйăрттарчĕ пире,
Ларса юлтăн пĕччен чĕрече умĕнче.
Эп вара çил çинче, çил çинче, çил çинче...
Пĕчĕк тĕмĕ пекех сив çĕре пуç çапатăп.
Эпĕ айăплă халь, эпĕ кутăн чакатăп.
Эсĕ лар çавăнтах, чӳрече умĕнчех!
Эп вара çил çинче, çил çинче, çил çинче...
Çил пекех кастарап тĕнчене тепĕр май.
Эсĕ лар çавăнтах, ман куçран тек ан кай!
Эп вара çил çинче, çил çинче, çил çинче...
Эсĕ лар çавăнтах, чӳрече умĕнче.
Пуç çаптартăн мана сив çĕре çыртиччен,
Çакă çил ман чунра пĕтиччен!

* * *

Çут çурта ташшине ас тăватăп.
Çав çурта пирĕн пурнăç пулса.
Çав çурта çутине тав тăватăп –

Мĕлкине те тăрап ас туса!
Çутăпа çав мĕлке ыталашрĕç,
Пĕр самант та пулмарĕç пĕччен.
Çĕрĕпе çав çурта ташларĕ
Пӳлĕмри пĕр сĕтел çинче.
Икĕ чун ун çине пăхса ларчĕç,
Шăпăрт пулчĕç çурта умĕнче.
Тен, вĕсем çурта евĕр шутларĕç,
Пĕр шутларĕç те çунчĕç пĕрле.
Шăтăр-шăтăр! тăвать шурă ăвăс,
Пăшăл-пăшăл! пătти – пĕр апат.
Шур çурта çуратать шурă сăвă,
Шурă сăвă чуна кăтартать.
Шур çурта пĕтĕмпех çунса пĕтрĕ –
Çĕрĕпе çуннă çут та сӳнет.
Шуçăма çĕрĕпе пĕрле кĕтнĕ,
Çĕнĕ кун ялтăрса килет.
Çав куна шур çурта çуратрĕ –
Ахаль мар çурта сӳннĕ пулать!
Çавăнпа çуртана юратрăм,
Халь ăçта-ши тата вăл ташлать?

* * *

Ик хут иккĕ тăваттă, терĕç,
Ик хут иккĕ тăваттă, терĕмĕр.
Çĕр те пин хут каларăмăр,
Пурте питĕ хытă савăнтăмăр.
Икĕ хут иккĕ тăваттă,
Икĕ хут иккĕ тăваттă –
Янăрарĕ тĕнче тăрăх.
Ахрăмĕ те çитрĕ çаврăнса.
Темшĕн вара икĕ хут иккĕ тăваттă мар,
Икĕ хут иккĕ пиллĕк, тет çав сас.
Тин çеç тăваттăччĕ, халĕ вара пиллĕк.
Мĕн пулчĕ?

Халĕ пурте ăнтăхса кайсах урăхла калаççĕ:
Ик хут иккĕ пиллĕк,
Ик хут иккĕ пиллĕк, теççĕ.
Чăн та, пиллĕк-иç! Мĕн-ма маларах каламан?
Эпир те çынран катăк мар!
Калатпăр эпир те çĕр пин хут.
Кам тăваттă тет, çав пĕтет!
Эпир халь пиллĕк хут паттăр!
Ик хут иккĕ пиллĕк,
Ик хут иккĕ пиллĕк –
Янăрать тĕнче тăрăх.
Ахрăмĕ килет каллех çаврăнса...

* * *

Юлашки аслати пек кĕрлерĕ,
Юлашки çиçĕм пек халь çиçет.
Юлашки тумламсем эрлĕк евĕр
Çĕр çине халь ӳкеççĕ пулать.
Юнашар-ха çӳрет ман телейĕм,
Юнашар-ха тăрать кĕлетки.
Кăшт кăна йăлл! кулли çиçĕмленчĕ,
Куçĕнче вăй илет аслати.
Юлашки хут çапать шăпа евĕр.
Эп юлатăп хытса юпа пек.

* * *

Ятсăр шыв тăрăх икĕ кайăк вĕçрĕç,
Хурлăхлăн тем шыраса вĕçрĕç...
Мăшăр çунат тем каласа вăшăлтатрĕ,
Шыв çапнăçем, çыран та кăвăлтатрĕ.
Шăнкăр-шăнкăр шывĕ юхать вĕççĕр.
Икĕ кайăк чун каниччен ĕçрĕç.
Шывĕ пулчĕ пулĕ питĕ тутлă,
Пĕри тĕпĕрине, ĕçнĕçем, чуп турĕç.
Кăвăл-кăвăл кăвăлтатрĕ икĕ кайăк.

Шăнкăр шывпа тулчĕ симĕс айлăм.
Пур кунта кайăксемшĕн чăн хӳтлĕх –
Çыранĕсем çăра хăва ӳтлĕ.
Шăнкăр-шăнкăр таса шыв вĕççĕр
Кунĕн-çĕрĕн хăйне туять ĕçлĕ.
Икĕ кайăк та ĕнтĕ канса тăранчĕç,
Тепĕр хут çул вĕçме тапранчĕç.
Ятсăр çырма тăрăх иккĕн вĕçрĕç.

* * *

Таçта аякра, Казах çĕрĕнче
Эс, ывăлăм, халь çӳретĕн...
Унта, халь шутлатпăр, таçта пит çӳлте
Хĕвел те тăрать кĕтретĕн.
Кунта вара тĕттĕм...
Кунта тахçанах хĕвелсĕр пурнатпăр.
Таçта аякра, Казах çĕрĕнче
Хĕвеллĕ тесе савăнатпăр...
Пăхма, тен, эс ху та хĕвел пек çӳретĕн,
Хĕвел пек пулса, тен, киле те çитетĕн...
Таçта пуш хирте, тен, хăйăр пĕрчийĕн
Çĕкленĕн çĕр çийĕн пире курас пек...

* * *

Куç илмесĕр, чуна чармасăр –
Кӳтсе çитнĕ-ха та ĕнтĕ вĕсем! –
Никамран та нимрен хăрамасăр
Иккĕнтен калаçаççĕ хĕрсе:
– Эп сана каласа ăнлантарнă;
– Эп сана нихăçан та манман;
– Эсĕ мĕншĕн вара манран тартăн?;
– Ун пек йывăр нихçан та пулман;
– Эп, шутларăм, мана эсĕ мантăн;
– Мĕн тăватăн вара эс манпа?;
– Тахçанах ĕнтĕ эп аманнă;

– Асӑнса, тен, лартатӑн юпа?.
Кирлӗ мар шеллеме, кирлӗ марччӗ,
Эп те халӗ асаплӑн пӑхап.
Ак, юпа тӑррине пырса ларчӗ
Ылтӑн кайӑк, темскер юрлать.
Вӑл юрлать те мӗнле чӑтса тӑрӑн,
Чул юпан та чӗри тапать.
Эп пулса, тет, тахҫан чӑваш тӑрӑн.
Ҫавӑ тӑрӑн пекех пурнап.
Вӗҫсе кайӑпӑр иксӗмӗр харӑс –
Чӗвӗл-чӗвӗл каять икӗ сас.
Кам пире халь вӗҫме те чарӗ?
Чул юпа та вӗҫевшӗн хавас!.

* * *

Эс килтӗн ҫӗр ҫине хӗвел элчийӗн.
Эс килтӗн ӑшӑтма ҫак сив ҫӗре.
Вӗҫет ҫутту хуралнӑ хула ҫийӗн,
Тем тӗрлӗн ҫутатать юр пӗрчине.
Ик аллунтан тумларӗ вӑхӑт хӑвӑрт.
Ҫут шыв юхать пӑрлак аллусенчен.
Эс ху та халь тӑратӑн питӗ шӑпӑрт.
Кӗтместӗн сив сӑмах ҫурхи ҫут кунсенчен.

* * *

Телейӗн ҫӗршывӗ те пур, тет, таҫта.
Пулса ҫавӑнта, тет, такам та!
Ҫӳрер-и эпир те ҫав юмахра,
Юмах ярса пар-ха тесессӗн.
Анчах та унта ҫул тени темиҫе.
Пӗр ҫулшӑн пырать тавлашу.
Ик ҫул ыткӑнаҫҫӗ тет ҫав ҫӑтмаха,
Таҫта ҫухалаҫҫӗ пӗр йӗрсӗр...
Чӑн ҫулӑн палли, тет, унта пӗр чечек.
Вӑл та сӳнет пуль кӗҫех?

Çĕршывĕ вара юлать пуль пĕрех
Сана эп кĕтетĕп çав çĕртех!

* * *

Шурă, шурă, питĕ шурă юр,
Камăн шухăшĕ санра халь пур?
Шаларан шала вăрман ăшне эс кĕр –
Шурă, шурă, шур юра вĕçтер!
Таврари вăрман халь шăп тăрать.
Сасă кăларма та вăл хăрать!
Юр пекех вăл вăрттăн шухăшлать,
Турат çине ларнă шур юр тăкăнать...

* * *

Ку вĕрӳçĕ чĕлхи пек пулчĕ.
Ман вĕри тута тем пăшăлтатрĕ,
Сывлăша вĕре-вĕре кăларчĕ,
Пăрлă кантăка йăлт ирĕлтерчĕ.
Пурччĕ-çке унта сĕм-сĕм вăрман,
Пурччĕ-çке вăрман чĕрчунĕ...
Вăрманти чечек темле чĕрех тăратчĕ...
Хĕл Туррин сасси те илтĕнетчĕ...
Вĕри сывлăша вĕре-вĕре
Çавă вăрмана йăлт ирĕлтертĕм.
Çутă кантăкран çак самантран
Урăхла тĕнче кĕрет,
Çав тĕнче çине тута вĕрет.
Сивĕрен кĕрет татах кĕтрет!

* * *

Урамра вăйлă тăвăл кĕрлет,
Урамра халĕ тĕттĕм тăрать.
Мĕн вара пит ачашшăн калаçрĕ?
Ман çине куç илмесĕр пăхать.
Çурхи кайăк пуль ку вĕçсе килнĕ?

Ӳкнĕ пĕр юр пĕрчи ирĕлет.
Хĕл Мучи майĕпен вилчĕ,
Ман чĕре вара тин чĕрĕлет.

* * *

Турă чунлă пулĕ эсĕ, чăн та.
Çакă тĕнчене ăсланă чух
Турă та çапла вĕрӳçĕ евĕр
Сăмахне вĕрсе каланă пуль.
Çавăнпа каллех çиçме пуçларĕ
Тин кăна хуран тăран çанталăк.
Пит çинче хĕвел шевли вылярĕ,
Сивĕ çил те çавăрчĕ çунат –
Шăнса кӳтнĕ ир те урăхла çунать!
Ту çинче тăратăп эпĕ халĕ.
Христоса кунта çакаççĕ пек.
Ман çумах ăна халь пăталанă,
Çавăнпа туяп хама – аван!

* * *

Авалхи вăхăтсем çаврăнса килчĕçĕ.
Çав вăхăтсем каллех илĕртрĕçĕ.
Ун чухне тĕнче панулмиллĕччĕ –
Эпир те ăна çисе киленнĕччĕ!
Юлашкине таçта пенĕччĕ!
Халĕ эпир хамăр та шуйттан,
Е турăпа тăратпăр юнашар?..
Эпĕ халĕ хам та панулми –
Çисе яр мана та ним юлми!
Çисе ятăмăр та – тĕнче пек пĕтрĕмĕр,
Панулми шăпине тӳсрĕмĕр.

* * *

Тăраттăн пăхса эсĕ чаплăн.
Такам, калăн, фото çапнă?

Кулаттӑн пӗр вӗҫӗмсӗр – чӑлтӑр!
Куҫу кӑтартса икӗ ҫӑлтӑр.
Ҫакна эпӗ куртӑм каҫ витӗр.
Тӗнче тӗкӗрленчӗ, ахӑр?
Ҫакна курсанах кӑмӑл ҫитрӗ –
Халь ӗнтӗ мана хӑть ҫакӑр!

* * *

Хӗвел шӑтса тухрӗ курӑк пулса.
Таҫтан тапса тухрӗҫ сӑртсем!
Пӗр айлӑм питех те асамлӑ выртса,
Унта халь юхаҫҫӗ юр шывсем...
Хӗвел хӑйне курчӗ тӗнче питӗнче,
Ачашшӑн чуп турӗ ҫӗр кӑкӑрне.
Самант тапса тухрӗҫ кӑтра хурӑнсем,
Хӗвел пекех ҫунчӗҫ ҫап-ҫут пӗвесем.
Хӗвел хытӑрах, хытӑрах юратать,
Ҫӗр тӑрӑх юр шывӗ юхать те юхать,
Тӳпе тӑрринчен сар хӗвелӗ ҫӑвать.
Халь ӗнтӗ кун пулчӗ, тӗнче халь пулать,
Хура ҫӗр халь хӑй те ача ҫуратать!

* * *

Уйӑх та пур, хӗвел те пур, теҫҫӗ.
Эпир мӗнле пурӑннине уйӑхпа хӗвел пӗлеҫҫӗ.
Темле йывӑр пурнӑҫсем килсен те,
Пире пӗтме памаҫҫӗ пӗрре те!
Пӗри сивӗре те пӗрех ӑшӑтать,
Тепри тӗттӗмре те пӗрех йӑлт ҫунать.
Ҫавӑнпа та чӑваш ҫирӗп тӑрать –
Уйӑхпа та, хӗвелпе те тупа тӑвать!

* * *

Урамра ҫутӑ кун, туй-ҫу.
Ура айӗнчи пӑр ҫап-ҫут!

Анчах ытла савӑнса ан пыр.
Утнӑ ҫӗртех ӳкетӗн – кӗрӗс!
Хӗвел те тухать халь тӗп-тӗрӗс.
Анчах ун ҫутине курмасть пӗлӗш.
Паян куҫа чарса пӑхсан та ҫук.
Паян пирӗн хушӑмӑрта Ю. Казанов ҫук!
Иртӗҫ кунсем, юхӗҫ шывсем ним те мар.
Ӗмӗрӗ те, чулӗ те куҫа курӑнмасть.
Вилсен пӗр купа ҫӗр пурӑнмалӑх –
Пӗтӗм тӗнче тӑрать чӳк тумалӑх.

* * *

Мана пӗрре пӑхса илни те ҫитетчӗ.
Анчах та эсӗ пӗрре те пӑхмарӑн.
Эпӗ ҫак тӗнчере ҫук пултӑм...
Ҫук, пуҫ ҫине вут ҫумарӗ,
Эпӗ ҫунине никам та курмарӗ.
Пӗрех, чӗре самантрах ҫунса тухрӗ.
Чунри сӗтлӗ кӳлӗ те хухрӗ.
Выртатӑп халь типпе юлнӑ пулӑ пек,
Тепӗр темиҫе минутран вилетӗп пек.
Анчах вилесси-тӑвасси пулмарӗ.
Пулӑ тени ҫӗлен-калта пулчӗ тӑчӗ.
Юшкӑн ҫййӗн авкаланса шуса кайрӑм –
Пурнӑҫ мӗнне питӗ лайӑх ӑнлантӑм.

* * *

Ҫӑлтӑрсем пек эпир ҫӳрерӗмӗр,
Ҫутатрӑмӑр, ҫутатрӑмӑр та – сӳнтӗмӗр.
Яр-ха, яр ман пата пӗр сӑмах.
Ҫак тӳпере ҫӑлтӑрсем ҫукрах!

* * *

Эпӗ те ҫак тӗнчене тума пултаратӑп-ҫке,
Эпӗ те каллех хама Турӑ пек туйса илтӗм.

Эпĕ халĕ хам та çурхи вĕçкĕн çил.
Эпĕ те тумлам пекех тумлатăп.
Илĕм-тилĕм ĕçлетĕп çĕр çинче.

* * *

Таçта аякра, тĕтреллĕ каçра
Курак-чавкасем çапăçаççĕ.
Сип-симĕс çут тăрăллă аллеяра
Ик çын калаçса тăраççĕ.
Пĕр-икĕ сăмах шăплăхра янăрать.
Аран çеç таçтан илтĕнеççĕ...
Çавсем пĕтесрен хыр-чăрăш хăрать.
Вара, тен, хăйсем те пĕтеççĕ.
Юр шывĕ çавна пĕлет пулмалла.
Юр айĕн вăл вăрттăн юхасшăн.
Çапла çеç тусан юлать пулмалла
Хĕл йĕрĕ ура айĕнче...
Ура айĕнчех юр шывĕ юхать.
Анчах икĕ çын васкамаççĕ.
Çурри тăрса юлнă тĕнче çухалать,
Хыр тăррисем çуталмаççĕ...

* * *

Вунтăваттă çаптăр–ха,
Вунтăваттă çаптăр...
Эпĕ те çырмара кĕрлесе юхăп.
Унтан вара акана тухăп.
Пĕр сăмах та пулин акса хăварăп.
Çакă пулĕ ман ака.
Вунтăваттă çаптăр-ха.
Акатăп...

* * *

Аналла ĕрĕхтерет пек вăхăт
Пĕр аллăран иртсен.

Пĕр чупнă чух ача пек шăхăр
Хăвна халь кăтартас пекех.
Эп ту тăрне каллех пăхса илетĕп,
Каллех вĕт хăпарма тивет.
Унтан анма, паллах, пĕлетĕп.
Анчах та хăпарма халь кам пĕлет?
Эп Сизиф пек чупса анатăп.
Çӳле тек хăпармашкăн вăхăт çук!
Çак ту çинче эп тек пулмастăп.
Миçе хут улăхса та – халĕ çук!
Халь тин ман вăхăт иртрĕ пулĕ.
Шуйттан-и, тет, анаталла туртать?
Манран çӳлте тăрса пулмарĕ...
Эп аялта та пит хитре выртап!
Аналла ĕрĕхтерет пек вăхăт.
Пĕр аллăран иртсен вара хăвăртланать.
Ун чух вара шуйттан пекех эс шăхăр,
Ун чух вара пăкку та сан шанать!

* * *

Пĕр тĕттĕм кĕтес çумĕнче
Шур юр пĕр купа юлнă.
Ура çав тĕле пычĕ...
Шур юрăн та пур вучĕ!
Хĕвеллĕ çĕрте вутăн çунчĕ.
Ăшшăн çĕлет хĕвел çипĕ,
Телей çавăнпа, тен, çитрĕ?
Тахçан шăнса кӳтнĕ ӳтĕм
Ăшă çĕре ӳкрĕ...

* * *

Ку темĕн пĕрре те курманччĕ
Нимле тĕлĕкре те сана.
Пачах сан çинчен шутламанччĕ.
Нихçан та килмен ман ăса...

Мĕн пулчĕ-ши, тусăм, мĕн пулчĕ,
Мĕн-ма килсе тăтăн ума?
Тен, эсĕ чирленĕ пулнă,
Çавна çеç каларăн мана...
Тен, эпĕ халь хам та чирлĕ
Шыратăп пуль эпĕ сана?
Мана эсĕ питĕ кирлĕ.
Мĕн пулчĕ ман мĕскĕн чуна?
Сана юратса çитерменшĕн
Халь эп кулянатăп пăртак.
Тен, çавăнпа эсĕ килтĕн?
Апла пулсан кил татах!
Пăхма хăй темле хытанкă,
Ик пит çăмарти тап-таса.
Кĕске кĕпепе те... тăсланкă
Кăштах курăнать куçа.
Каллех куç умне тухса тăчĕ
Хыткан та таса хĕрача.
Темле тепĕр хут телей сăрчĕ
Кĕтет пек мана тата!

* * *

Пăхатăп та, курăк питĕ савăк,
Йывăç тураттисем те темле авăк...
Эпĕ вара, тĕнче пĕтнĕ тенĕччĕ...
Пăхăсăн, мĕн чухлĕ чĕрĕлĕх!
Тӳпе темле тĕкĕрленнĕн...
Кайăк пек шăхăрса юрласа ятăм.
Пĕтмен-ха манăн ятăм!
Кивĕ çулçăн çĕртен çĕкленсе илтĕм,
Эпĕ те пурăнма тепĕр хут килтĕм.

* * *

Эпĕ ĕнтĕ ку çулпа çĕр пин хут утнă.
Ку çул çинче эпĕ тем те тупнă.

Паян та, акă, пуçа пăркаласа пыратăп.
Паян эпĕ хама хам пуçласа куратăп...
Пĕчĕкех те мар эпĕ, анчах темле сăнсăр,
Мĕн тунă пĕр ĕç килсе тухать ăнăçсăр.
Тĕссĕр кăна плаща йӳле янă,
Хирĕç пулакан пуль тем те каланă.
Эпĕ халĕ питĕ вăйсăр, тата питĕ хăравçă,
Çав вăхăтрах темĕнле ăслă шухăшлавçă.
Çакă тĕнче пĕтесрен питĕ пăшăрханатăп,
Хирĕç пулакансене ăнлантаратăп.
Акă, пĕр пĕтнĕ чуна çăлма тесе тăнăччĕ,
Çавăншăн мана хама та тăна кĕртнĕччĕ.
Ӳкĕтлеме ăна никама та кирлĕ мар-мĕн,
Вĕсен туррисем тахçанах тарса пĕтнĕ-мĕн...
Акă, халĕ вара, кур, пыратăп яр уçă.
Йывăçсем те вĕт-ха ман пекех çара пуçăн.
Çул хĕрринчи йывăç пек хама куртăм,
Çак çул çинчи пĕтнĕ чунра хама тупрăм.

* * *

Тин кăна ăшăччĕ...
Халĕ вара сивĕтсе пăрахрĕ.
Пĕтĕм чĕрчун тарса пытанчĕ.
Эпĕ кăна çилпе тăрса юлнă.
Эй, Турă, пире хăтаринччĕ!
Кам шутланă çапла пуласса,
Чечексем пек пулса шанасса...

* * *

Хĕл кунĕпе тĕл пулчĕ çур кунĕ.
Юр килсе пачĕ шап-шур.
Шурă хурăнăн симĕс юнĕ
Çулçă пекрех темле симĕс пăр.
Хурăн çӳлте те, сыхланма пĕлмерĕ.
Турачĕсем тулли шурă юр.

Аяла вара пĕр юр та ӳкмерĕ.
Хурăн тавра симĕс çерем пур.
Юр та, тĕрĕссипе, хурăна упрарĕ.
Шупăр пекех хурăна хуплать.
Сивĕ пулсан та шăнма памарĕ.
Апла, халь пурăнма пулать.
Хĕл иртĕ те каллех çур кунĕ
Вăратĕ шăннă хурăна.
Ун çиййĕнчи сип-симĕс тумĕ
Каллех хускатĕ ман чуна.

* * *

Каллех, акă, эп ас илетĕп
Пĕрле кĕл туса ларнине.
Пĕлетĕп, пĕрех эп вилетĕп.
Пурнасчĕ-ха, теп, кайиччен.
Пĕрех тепĕр хут куратăп
Тĕнче ялтăрса тăнине.
Çавна та курса кулатăп –
Туятăп телей пуррине.
Сăмах хыççăн ӳкрĕ сăмахăм
Ачашшăн ачаш ача пек.
Тен, çав вăл тĕнче юмахĕ
Кĕрет чĕрене майĕпен...
Кĕрет те юлать яланлăх.
Вара майĕпен аса ил.
Мĕнле хĕрхенсе каларăн:
«Пĕтетĕн эс, Михаил!».

* * *

Каллех çулçă йăтрĕ шур хурăн,
Каллех симĕс тум çиййĕнче.
Кăштах пăхса илтĕм салхуллăн –
Çулçи кăшт вылять çил çинче.
Мĕн-ма сана çил хыт юратрĕ,

Мĕн-ма туй тăвать çуркунне?
Пĕрех эп сан пек тек пулаймăп,
Пĕрех пĕлес çук чун мĕнне.
Таçта ларса юлтăн эс шăппăн,
Пĕр авăк çырма хĕрринче.
Çӳретĕп-ха эпĕ те лăпкăн,
Ман çӳç те вĕçет çил çинче.
Кăштах сан пекех тайăлатăп,
Кăштах юратас та килет.
Сан евĕр, тен, çулçă йăтатăп –
Манра та çур кунĕ çӳрет!

* * *

Тепĕр чухне эпĕ хама ват çерçи пек туятăп пулас.
Таçтан тупнă пĕр татăк çăкăршăн та питĕ хавас.
Татах сиккелетĕп вара, татах та тупас пек тем турпас.
Тахçан манăн чун пулса, тет, çерçи – кайран этем.
Çерçи пек хăравçă эпĕ, çерçи пек таратăп самантрах.
Кăштах сăнаса пăхса илĕр-ха, çерçи пек эп чăнах.
Чĕр-чĕр! те чик-чик-чирик! пăр-пăрр! илтĕнет пĕрмаях.
Çерçи халĕ тин пĕр татăк çăкăршăн та вилет çапăçсах!

* * *

Пĕр карчăк пек эпĕ хам та,
Кăшт çĕтĕк те çурăк, катăк...
Таçтан сăрхăнать темле юрă,
Таçта юрату та пур-тăр!

Çак карчăк пекех выççăн
Нихçан та чупман апат хыççăн.
Мĕн-ма-ха вара çын пек туйрăм,
Эп карчăках мар та – супрăм.
Эп те санпа пĕрлех çав,
Эп те сан пек çĕтĕк-çурăк...
Çак шухăш мана çĕклерĕ,
Çĕклерĕ те çын пек турĕ!
Юхать çеç пĕр çепĕç юрă.
Таçта юрату та пур-тăр!
Хама карчăк пек куртăм,
Çына çавăнпа юратрăм...

* * *

Пĕр пĕчĕк ача чечек татать те
«Илемлĕ-илемлĕ!» текелет,
Чечек илемне ăнланать.
Татать те савăнать.
Эпĕ вара пăхса çеç тăратăп.
Тепĕр чух асăрхамастăп та...
Мана вĕсем ним тума та кирлĕ мар!
Ача чухне вара ман та тем пурччĕ.
Пахчаран чечек татса кĕреттĕмччĕ.
Чӳрече янаххи çине лартаттăм та савăнаттăм,
Çеçкине тăксан хурланаттăм...
Халĕ вара тем пулчĕ? –
Чечек те кирлĕ мар пулса тăчĕ.

* * *

Ман ывăлăм килчĕ салтакран.
Ик çул çӳресе вăл таçта аякра...
Киле килессе кĕтсеччĕ куллен,
Халь тин пурăнатпăр хуллен.
Пурнатпăр каллех ывăлпа пĕрлех,
Эпир пуррине вăл та тин пĕлет...

Çӳрет-ха каллех таçта урамра,
Амăшĕ уншăн питех те хăрать.
Ара, урамра унта çичĕ ют.
Унта мăй părаççĕ тепĕр хут.
Аранччĕ тарса икĕ çул каялла,
Каллех çавăнтах, ак, качка хăвала!
Халь ĕнтĕ пурнатпăр. Пăхма вăл кĕрнек.
Мундир тăхăнсан, чăн-чăн пĕр корнет.
Анчах та ăна вăл пит уямасть,
Пире те патне пит ямасть!
Вăл çын пулса çитнĕ. Вăл хăй те арçын.
Халь тин ĕнтĕ, амăш, ан пăшăрхан!
Анчах та пулмасть пуль пиртен лăпланса,
Унпа пĕрле халь те çӳретпĕр чупса...

* * *

Пурте пур чухне пурте пур пек.
Çак сăмахсене те çырма кирлĕ мар тек.
Анчах кун хыççăн кун иртет,
Каллех темĕн тăвас килет.
Пурри те пĕтет!
Пуçлатăн вара ĕçлеме...
Ĕçне туса пĕтертĕн те – каллех ирĕклĕ.
Каллех ним те кирлĕ мар пире.

* * *

Кăвăл-кăвăл та кăвăл-кăвăл
Кăвăлтатрĕç икĕ кăвакарчăн.
Эпĕ çавна тĕлĕкре итлесе выртрăм,
Тĕлĕкре тем те куртăм.
Кăвăлтарĕç те вĕçсе кайрĕç.
Хĕвел кăвакарчăн пек вĕçсе тухрĕ.
Кун кăвăлтатса пуçланчĕ.

* * *

Ытарайми куçпа пăхса илетĕп тепĕр хут.
Епле пĕтми çунать кĕрхи сар çулçă!
Ăна ача пек эс пуçтар-ха тепĕр хут,
Унпа пĕрле вара çунан эс ху та...
Туятăп эп хама çав çулçă тăраллă –
Тӳпе те вĕт ку темĕн йăлтах тăрална.
Таса та тарăн-мĕн чăвашăн тӳпи –
Унтан кăларăпăр эпир хĕвел çути.

* * *

Сăмса айĕнчи курăнмасть теççĕ.
Пурăннă-пурăннă, курман та...
Çапах та пĕрле пурăннă.
Пурăннă та пураннă!
Тепĕр чух, тен, вăрçнă,
Чирленĕ.
Пĕрех, пурпĕрех пĕр-пĕрне упранă.
Тăхăнтарнă, çитернĕ, тасатнă...
Сăмса айĕнчен тенĕ пек пăхса ларнă.
Пĕр-пĕрне курман.
Тен, хакламан...
Халь вара сан çине пăхатăп,
Сăмса мĕнлине куратăп.
Санпа пĕрле питĕ лайăх.

* * *

Куратпăр хамăра пĕр пек, пĕр тан.
Кашни хăйне кура куштан.
Кашниййĕ шакла пуçлă е кукша.
Кайса тăратпăр та кăштах шукша
Каллех пуçлатпăр пĕр-пĕрне çăлма.
Аван-çке юнашар тăма, пĕр-пек пулма.
Тен, эпĕр ӳкнĕ çĕр çине çĕрме улма?
Кусса каятпăр... Ун пек пулсан аван.

Анчах та эп нихҫан та панулми пулман!
Эпир халь курӑк вырӑнне те мар,
Каю кӑна шӑтса тухать пӗрмай!

* * *

Мӗн уҫӑлчӗ?.. Ним те уҫӑлман вӗт-ха!
Уҫӑлман пулсан мӗн-ма ҫыран?
Чун йӑлт хытса хупӑланса ларнӑ.
Ӑна, тен, хускатма та кирлӗ мар!
Хытӑ хуппине тӗрлӗ тӗслӗ сӑрлас та
Питӗ илемлӗ туса кӑтартас.
Ай, лайӑх ку! Ай, чипер, тейӗҫ.
Эсӗ вара ним пулман пек чей ӗҫ!
Ҫав айвансем ҫине пӑхкаласа лар –
Атьӑр, эпир те вӗсенчен кулар!
Хӑвна хывӑхпах улталама пулать ҫав.
Тулашӗ пур, шалӗ вара нимӗн чухлӗ те ҫук.
Ҫавӑн чухне тумалла мар-и чӳк?
Акӑ, эпӗ пуҫа пӗкетӗп, сывласа илетӗп,
Пӗр-икӗ сӑмах та пулин калас тетӗп.
Сӑмах каласан, чун кӗрет, пӗлетӗп.

* * *

Пилеш палӑра пуҫларӗ,
Ҫупкамӗ, паллӑ, йывӑрланчӗ.
Тур панӑ парне пуль пулчӗ,
Чӗрем те ҫупкам пек тулчӗ.
Хӗп-хӗрлӗ темле кӑвайт майлӑ
Тавралӑх та хӑвӑрт ҫуталчӗ.
Пилеш ҫутипе утса кайрӑм,
Кайсан, ҫаврӑнса пӑхкаларӑм.
Эп хам та пилеш пек пултӑм,
Пилеш пек тепре хыпса ҫунтӑм.

* * *

Ăшă çумăр çăвать кунĕпе.
Ăшă çумăр çуса çĕрĕпе!
Ăшă çумăр çăвать ĕмĕр-ĕмĕр.
Çумăра аса илтĕмĕр эпĕр.
Тахçанах вăл çуса тĕнчипе,
Халь те пулĕ çăвать ерипе.
Ăшă-ăшă çумăр çăвать,
Ман чуна çу пекех тăвать.
Питĕ лайăх мана ас илме,
Çумăр айĕн пăхса çӳреме.
Çумăр халĕ кăвак-симĕс куçлă,
Ман ӳт тăрăх шăрçа пек кусрĕ.
Ăшă çумăр вĕт шăнкăрав пек
Шăпăр-шăпăр! та шăпăртак! тет.

* * *

Август, август, шăллă çурла.
Пĕр сăмах та тек ан шарла!
Вĕрене те, ак, шăпăрт ларать.
Вăл çеç тĕнчене халь курать.
Сивĕ, тет, сивĕ. Сивĕ–сивĕ!..
Каçсемпе çанталăк сивĕ.
Çĕрĕпе ларса шăнса кӳтрĕм.
Çулçăм та çĕре пĕр-иккĕ ӳкрĕ.
Çав çулçа курса эпĕ те ӳкрĕм.
Çул çинче выртатăп ӳппĕн.
Çĕр сивĕ, сивĕ, сивĕ, сивĕ!..
Манăн та ватăлма вăхăт çитрĕ.
Çӳç пĕрчисем, сисмерĕм те, шуралчĕç.
Ӳт, тем пулчĕ, пĕрчĕкленсе ларчĕ.
Çак самантрах вилесрен хăрарăм,
Вĕрене пекех шутлама пуçларăм.
Ирпе хĕвел тухсан аванччĕ,
Ăшă çил çинче туратăм авăнатчĕ.

Сĕткенĕм те туна тăрăх чупатчĕ,
Çулçа çутă сăн çапатчĕ.
Хĕвел, чăн та, кĕттермерĕ – тухрĕ.
Сивĕ пулсан та чун сывларĕ.
Хăйĕн вырăнне ман чун тупрĕ.
Вĕрене тек урăх шарламарĕ.

* * *

Чун çил çинче çулçăн вылянчĕ.
Тӳртĕн те, пичĕн те çаврăнкаларĕ.
Вăл хĕвел çутине тытасшăн пулчĕ.
Тытрĕ. Халĕ ĕнтĕ çил те ним те мар.
Çил çинче çӳле вĕçет пĕрмай.
Хĕвел ăçтине пĕлет,
Çӳлте чăннипе вăй илет.

* * *

Сăвă çырас килми пулчĕ.
Мĕне пĕлтерет-ши ку?
Юлташăм Ахрат çырмине сикрĕ.
Тен, пуçхĕрлĕ тăтăн ху?
Ку савăнăç та вара, калĕç, пулчĕ,
Ку та сăвă çырма пăрахрĕ.
Ку та пирĕн пекех пулса тăчĕ.
Пирĕн пекех ним те çырмасть халь.
Малтан сăвă çырап тесе мухтанатчĕ.
Турă пекех умра курăнатчĕ.
Халĕ ĕнтĕ ку та пусарăнчĕ,
Вăл та ахаль çын кăна халь...
Эпĕ вара, чăн та, çырма пăрахрăм.
Выльăх мар пулсан та, çын та мар!
Турă çинчен шутлама вăй тупаймарăм,
Эпĕ халĕ, чăн та, ыттисемпе пĕр тан.
Сăвă çырас килми пулса çитрĕ.
Чун кансĕрленни иртрĕ.

Илтрĕм, такамăн таçта хăмпи шăтрĕ.
Кам ухмаххи унта перо тытрĕ?

* * *

Ăçтан килсе ларнă вăл?
Тутлă шăршлă тата явăнать кăна.
Темле шур çеçке кăларнă,
Темле çимĕç...
Аври хăмланни пек. Сарай тăршшипех
Хăпарнă кайнă таçта çитиех!
Нихçан та курман кун пек çимĕç!
Хăяр пек. Темле питĕ йăплĕ.
Темле ют çĕртен.
Темле ют планета.
Кунта вĕçсе çитнĕ. Тен, ракета
Вăй пухĕ те, акă...
Шалта ун, чăнах та, темле ĕç пырать.
Çӳлтен те çӳле вăл кармашать.
Сарай тăрринчен ярать тепĕр çулçă.
Тĕнче халĕ уншăн йăлт уçă!
Ăçта вĕçсе кайĕ – пĕлесчĕ,
Унпа пĕрле ман та вĕçесчĕ.

* * *

Тепĕр чух ирхи хĕвел çутипе реххетленетчĕ,
Тепĕр чух çумăр айĕнче куççулленетчĕ,
Лайăхчĕ ăна сиксе те чĕтренсе пурăнма.
Тем пулчĕ ĕнтĕ ăна, тем пулчĕ?
Талчĕ те ӳкрĕ.
Выртать халь ура айĕнче.
Çĕр те пĕр пин çын утнă çул çинче
Ним те юлман унран.
Тусанĕ те çук.

* * *

Çырма хĕрринчи ват йăмра пек
Теме эп кĕтсе ларатăп.
Çут тĕкĕрлĕ хумлă шывра
Çут пулăсем тытатăп...
Тытатăп та, чăн та, куратăп.
Турат çине пытăн та лартăн!
Эс кайăк пулса-мĕн çӳретĕн...
Куçа курăнатăн кĕтретĕн.
Ак халĕ темле шăпчăк ятлă
Кайăк пек юрласа ятăн...
Кам курнă çапла кайăк,
Пурах ун чунри пĕр айăп.
Çав айăп пуль хуса çитрĕ.
Куçа курăнатăн ик питлĕн.
Сана эп кĕтсеччĕ хĕр ӳтлĕ.
Шыва вара тĕк ӳкрĕ...
Пĕр шур карап пек çак шурă тĕк
Шыв çийĕн çăмăллăн ишрĕ.
Эп лартăм вара йăмра пек.

* * *

Тĕл пулманччĕ санпа пĕр çулталăк.
Пуç тайсах пăхса тăтăм пĕр авăк.
Шурă хурăн татах та çутă.
Çутине сапса тăчĕ пĕр хушă.

* * *

Санпа тепĕр хут тĕл пуласшăн
Çӳреттĕм-ха эп ĕмĕтленсе.
Çил майăн, хĕвеллĕн, хаваслăн
Тăратчĕ вăрман çĕкленсе...
Пĕр çулçă кăна эп тытасшăн.
Ӳксен вĕт пĕтет самантрах!
Эс, çулçă, ача пек, тархасшăн,

Чуччу ярӑнсам туратрах!
Ӳксен те ӳкесчӗ вӑраххӑн.
Ҫӳлте ҫил ҫинче вӗҫкеле!
Вара эпӗ хам та хӑраххӑн
Ҫӳретӗп-ха пуль-ха хуллен...
Вара эпӗ хам та вӗҫетӗп
Ҫав ҫулҫӑ пекех пӗр самант.
Ҫӗре ӳкес чух ҫиҫӗнтертӗр
Ҫак тӗнчене тепӗртак!
Паян юлашки хут курнаслӑн
Ҫил сиввипе чӗтренет.
Ҫулҫи тытӑнса юласшӑн –
Юлсассӑн, телей килет!

* * *

Ирпе шупка уйӑх куртӑм.
Уйӑх пек ҫӑмӑллӑн утрӑм.
Утма ҫул ҫинче пӗр-ик ҫулҫӑ
Ача тетти пек ванса юлчӗ.
Ҫӳлте халь йӑлтах ҫара хулӑ.
Ӑҫта-ши вара сап-сар ҫулҫӑ?
Ҫултан пӑрӑнса эпӗ кӗтӗм,
Вӑрман ӑшӗнче ҫӗтрӗм.
Унта эп тӑратӑп вӑрттӑн.
Такам чупса иртрӗ хӑвӑрттӑн.
Унта ҫулҫӑ сарнӑ ҫул,
Чӗре сиплемелӗх пур.

* * *

Халь ӗнтӗ тӗнче саланать майӗпен.
Тӳпе те йӗпе тӑрать.
Пӗрех чунра пур тур панӑ килпет.
Ҫавӑ савӑнтарать!
Сӑлтавӗ мӗнре-ши тесе пӑхкалатӑп.
Тӗнче мӗне ҫавӑрнӑ йӑлт!

Кёрхи кун çаврать – ăнланатăп.
Çав çаврăçил çулçа купалать!

* * *

Кун килет те каять çарапуçăн.
Кунёпех сар хёвел пăхать.
Хурăнри çулçăсем куçа-куçăн
Калаççа кăварланчĕç пулать?
Сăрт çинчен çырмана анмалăх
Вăрăм-вăрăм çеç пĕчĕк пусма.
Ун вĕçне эп анса çитеймерĕм.
Çитеймерĕм те тăтăм пăхса.
Ман умрах ялкăшать пĕр хурăн.
Çулçине ална тăс та тат.
Талнă пĕр вĕçсе кайĕ хăвăрт.
Юнашар тăнипех çырлахас!
Талнă çулçă вĕçет айăн-çийĕн,
Çил çинче çаврăнать хавас.
Çавăнпа та тек пĕртте татмарăм.
Çил хăех килсе татĕ ак!
Пусмапа та тек пĕртте анмарăм.
Аниччен эп сăрта хăпарам!
Сăрт çинчен курăнать пысăк айлăм.
Анса çитнĕ çынсем те нумай.
Унта пур хăйне майлă талай.
Ах, анчах вăл пире кирлĕ мар!

* * *

Пахча çумĕпе иртсе кайрăм.
Сар йывăç хыçран чĕнчĕ.
Çыру хыççăн çыру ячĕ.
Унтан пĕр сăмахсăр ларчĕ.
Халь ĕнтĕ вăл хăй сăмахне
Йăлтах каласа хăварчĕ.

Тем чул каласан та пĕр çын та
Ăна илтекен тупăнмарĕ.
Тур çырнă çыру майĕпен
Пахча тăршшипех сапаланчĕ.
Вăл халь те выртать, атьсемĕр,
Çавна вуласан аванччĕ!
Каçар ĕнтĕ, йывăç, пулмарĕ
Сана тепĕр хут вуласси.
Тен, халь çавăнпа вăрахăн
Çыратăп çыру сан патне.

* * *

Пĕр çулçă та ларса юлмарĕ.
Пĕрин хыççăн тепĕри çĕре ӳкрĕç.
Чун çавăншăн пĕрре те хурланмарĕ –
Эпир те вĕт-ха çав çулçă ӳтлĕ!
Пирĕн те çĕре кĕмелли вăхăт çитрĕ.
Эпир те тăпра пулăпăр майĕпен.
Ĕнтĕ пĕр çын та юлмасть çĕр çинче.
Ĕнтĕ вăрлăх пек выртăпăр çуркуннеччен.
Вăхăт çитсен шăтса тухăпăр çĕр айĕнчен!
Тĕнче хăйне хăй пĕтме памасть пулĕ тетпĕр.
Çулçăсăр тăрса юлнă йывăç пĕтмест тетпĕр.
Çавăнпа та çав йывăçпа халь киленетпĕр.

* * *

Халĕ ĕнтĕ манăн пĕртен пĕр пурнăç юлнă.
Вăл пуррипе çуккине эпĕ малтан пĕлмен те.
Мĕнпе тăранса пурăннине чухламасăр
Кăкăр туллин сывланă.
Акă, сывлăшсăр тăрса юлнине сисрĕм те,
Сывлăш çитми пулчĕ те, сана тин туйса илтĕм.
Эсĕ кăна манăн пĕртен пĕр хăтлă килĕм.
Эсĕ кăна ман пурнăçăмпа вилĕмĕм.
Эсĕ пулсан кăна-мĕн çакă тĕнче пур.

Эсӗ пулсан кăна никам та курмасть хур.
Эсӗ ху çакна тахçанах ăнланса илнӗ пулас.
Пӗр сăмах чӗнмесӗр тута хӗррипе кăна кулса,
Хăвăн ӗçна куллен, хӗлӗн-çăвӗн туса пыратăн.
Çемьене таса тытса тăратăн, тăрантаратăн.
Сан таса сывлăшăупа сывласа пурăнатпăр эпир,
Таса аллусем хатӗрленӗ апата çисе вăй илетпӗр.
Сан сăмахусем, сайра каласан та, чи кирлисем,
Çак тӗнчене тытса тăракан тӗрексем.
Ӗнтӗ эпӗ сан сывлăшупа сывлама чарăнмăп.
Вăл пӗтсен вара эпир иксӗмӗр те пӗтӗпӗр.
Сывла, тăванăм, сывла çав таса сывлăшпа.
Çакă сывлăшранах ман чун-чӗре те тӗнче.

* * *

Сăмах калама васкамалла мар.
Сăмах вăл хăрушă япала.
Эсӗ чăтаймарăн, тарăхнă-ха та, каларăн.
Çав сăмах халӗ те янăрать хăлхара.
Эпӗ ăна халь пӗр сассăр,
Чун тепӗр хут ан амантăр тесе,
Аса илетӗп.
Ас илнӗçемӗн татах сивӗнетӗп.
Малтан, илтсенех, пӗлесчӗ,
Чӗре пăрлансах ларчӗ.
Халь ӗнтӗ, кăшт ăшăтсан,
Юн чупа пуçласан,
Каллех юратас пек тапнă чух,
Таçтан амакран,
Çав сăмах
Сикет те тухать,
Шăнтать те хурать.
Ах, çав сăмаха каламан пулсан-и,
Чӗре ним пӗлмесӗрех юлатчӗ.
Вăл, тен, халӗ те юрататчӗ...

Тусăм, сăмах калама нихăçан та
Ан васка.
Сăмах вăл хăрушă япала!

* * *

Вăрман темĕнле туннель пек.
Унта кĕрекен çĕтет пек.
Унта шурă-шурă юр,
Утмалăх сукмакĕ те пур.
Турат карса илнĕ çĕрте
Кăштах курăнать тӳпе.
Ку хӳшĕн тăрри шăтăк,
Сукмакĕ те питĕ путăк.
Унпа утса пытăм вăрахăн,
Пулсаччĕ эп хам та хăрахăн.
Халь вара пыр та кур,
Манăн та килĕм пур!
Кăштах ăна пас тытнă,
Тен, çавăнпа вăл хăтлă?
Пăрпа пăрланса хытнă –
Пĕрех курăнать сумлă!
Тен, çавăнпа питĕ лăпкă,
Тен, çавăнпа питĕ шăп?
Вăрман темĕнле туннель пек.
Унта çӳрекен çĕтет пек.

* * *

Кĕлт кăна пăхса илчĕ хĕвел.
Çул хĕрне тухса ӳкрĕ мĕлке.
Ман мĕлке питĕ вăрăм иккен,
Çĕр хĕрнех тăсăлать темелле...
Çут хĕвел пуль кăтартрĕ çул,
Хам мĕлке хыççăн кайрăм тем чул.
Çут хĕвел тăрса юлчĕ хыçра,
Хуп-хура пĕр мĕлке çеç умра.

Çав мĕлке вара çул-мĕн пĕлмест.
Пулĕ те, тен, ун пĕр тĕллев,
Ун çинчен халь никам та пĕлмест.
Тен, пĕлсессĕн те чĕнмест.
Çич çырма урлă çул тасçта
Илсе кайрĕ мĕлке хыççăнах.
Анăçра унта халĕ каç,
Анăçра мĕлкесем хуçа!
Мĕлке хыççăн каймастпăр тек.
Хĕвеле ăш питпе çаврăнар.
Халь ăçтан-ха тухать çав мĕлке?
Айăпли халь кунта хĕвел мар!

* * *

Сивĕ, сивĕ, сивĕ тесе пыратăп.
Ма тăхăнмарăм-ха, шутлатăп.
Çил кассăн-кассăн килсе çапать,
Çӳхе плащ витĕрех тухать.
Чăвашăн ăсĕ кайра çав...
Шăл шаккаса, куççуль кăларса пыратăп.
Ĕçе хăвăртрах çитсе ӳкес тетĕп.
Хăвăрт утма та май çук.
Çул пăрлаклă.
Ӳксен пуçа çапса çурăн...
Васкама юрамасть.
Шăнма та!
Çавăнпа та ни ӳкни, ни чупни çук.
Çиле хирĕç хăлаçланатăп.
Ӳкме тăратăп – ӳкместĕп.
Чупма тăратăп – чупмастăп.
Хама, чăн та, ăмăрт пек туятăп.
Сивĕ тесен сивĕ мар, ăшша пиçме ăшă мар.
Çĕрпе пĕлĕт хушшинчи кайăк та мар.
Ӳсĕр тесен ӳсĕр мар.
Урасăр тесен урасăр мар.

Тĕлĕнмелле хутлăхра пулса куртăм паян.

* * *

Вăрăм чăрăш авăнать те
Чăпар куккук авăтать.
Ăшă чухне, мĕн калăн,
Мĕнпур тĕнче савăнать.
Сив хĕл çитсен, пас тытсан,
Куккук сасси çухалать.
Ун вырăнне турат çинче
Юр чăмакки курăнать.
Чăрăш каллех авăнать,
Куккук ларнă пек туять.

* * *

Эс пулă пек питĕ вылявлăн,
Шывра хĕвел пек çӳреттĕн.
Такам çавăнта вăлта пăрахса та
Туртса та кăларнă çыран хĕррине...
Эс, чăн та, хĕвел пек, анчах та
Çыран хĕрринче çеç выртатăн,
Ташланă пек тăпăртататăн,
Ик аллупа шарт çапатăн...

* * *

Пăлт та палт! çаврăнса ӳкетĕп.
Ӳксен, эп тăма та пĕлетĕп,
Пĕр кана упаленетĕп...
Тахçан упăте пулнине аса илетĕп.
Эпĕ те çын пекех ура çине тăма пĕлетĕп!
Ара, ку сукмак тăрăх пĕрре кăна мар
Утса иртнĕ этем, пин хут та ӳкнĕ...
Ӳкнĕ пĕр тĕлте çĕр хăех тĕртсе тăратнă.
Тӳпе те, тен, хăй патне туртса тăратнă?
Çавăнпа та, сукмак пăрлаклă пулин те,

Пĕр хăрамасăр утса пыратăп вăрман витĕр.
Паллană та палламан та пек ку вырăн,
Хĕвел эпĕ асапланнине пăхса тăрать ыррăн.

* * *

Унта кив çăва тетчĕç,
Çынсем айккинчен иртетчĕç,
Ку çул мĕнлине пĕлетчĕç.
Эпĕ те ĕнтĕ пин çул пуль
Çав çул айккипе çӳрерĕм,
Çăва çине пĕртте кĕмерĕм.
Çӳрерĕм-çӳрерĕм те тухрăм
Çав çул хĕррине тепĕр хут.
Унта-мĕн сукмак та пур!
Кăштах палăрма пуçланă,
Такам вĕт ăна такăрлатнă!..
Апла, вăл мана такăнтармĕ.
Халь тин урана ярт çеç ятăм.
Кăна ан кала, эс суятăн!
Суймастăп, чăнне калатăп.
Ку çул халĕ пит пысăк,
Утса та тухма пулчĕ кăсăк.
Таçта асатте те пур пек,
Таçта асанне те тур пек...
Çăва çине пыр та кур,
Халь çавăнта пирĕн çурт!

* * *

Юр çинчи курăк ытла та симĕс.
Ун илемне нимĕнле илемсем те çитмĕç.
Ку ĕнтĕ, паллă-ха, ултавлăх.
Юр çинче кам çапла хуçалантăр?
Юр вăл питĕ сивĕ, сивĕ, сивĕ...
Кам ун çине пырса выртнă – вилнĕ!
Пĕрех вĕт-ха, пăх-ха, шăтнă.

Ку курăкăн тăрри, тен, шăтăк?
Юр çинчи курăк калама çук илемлĕ.
Манăн куçа курăнчĕ темле имлĕ.
Çак тĕлте пуль тĕл пулчĕç
Пурăнăçпа вилĕм?
Эпĕ те çак тĕле тем тума килнĕ?
Эпĕ темле пĕр палламан çĕршывра пурăнатăп,
Çав çĕршврах курăк пек пĕтесрен хăратăп.

* * *

Пăлтăр-палтăр! çĕр куçатчĕ
Уçлăх варринче.
Кăптăр-каптăр! пек курнатчĕ
Пурнăç çĕр çинче.
Тăйлăк-тайлăк! пек утаттăм
Халь ӳкес пекех.
Çыннисем те, эп куратăп,
Чунсăр пулинех!
Эпĕ те вĕсем пек пулнă,
Эп те мур ачи.
Эпĕ кулнă, эпĕ сурнă –
Эп хула ачи!
Пăлтăр-палтăр! çеç тăватăп
Урккă хушшинче.
Кăптăр-каптăр! пек, туятăп,
Пурнăç çĕр çинче.
Ĕнтĕ çиттĕр, эп шутлатăп,
Пурăнса кун пек.
Аттене эп ас тăватăп,
Пулнă Улăп пек.
Эпĕ хам та питĕ пысăк,
Юман пек ӳсеп.
Турата çеç темшĕн усрăм...
Вăл та хур тӳсет.

* * *

Хаçата çăкăра илнĕ пек илетчĕç.
Апла, сăмах та çăкăрпа тан!
Çăкăршăн çынсем çапăçса вилетчĕç,
Сăмахпа та çынна ним те мар хуçан!
Кайран çăкăра хаклама пăрахрĕç.
Пĕр вăхăт пылчăк вырăннех хучĕç.
Ачасем мечĕк пек тапатчĕç,
Амăшĕсем кăларса пăрахатчĕç,
Çăкăр тăваканран кулатчĕç...
Сăмахпа та çапла хăтланчĕç,
Куçран пăхса суя сăмах калатчĕç.
Сăмахăн та хакĕ хухрĕ.
Анчах çăкăрсăр, сăмахсăр пурнăç çук.
Мĕншĕн вĕсене халь черет тăрса илмесçĕ?
Тĕрĕс мар ку!

* * *

Тĕнче çути таçта çухалчĕ,
Мана хăр тăлăххăн хăварчĕ.
Выртса-тăма та питĕ йывăр,
Аран-аран çеç халĕ сывлăн...
Аса илетĕн, питĕ канлĕн,
Пăхса тăраттăм тин çуралнăн
Эп сан çине, эс кулнă чух,
Эп хам та пулнă питĕ шух.
Анчах мĕн-ма-ха пуçа пĕкрĕн,
Пĕр кайăк пек пĕчченçĕн пĕтрĕн?
Вĕçеттĕн эсĕ каçа хирĕç,
Пуçна та пуль ку темĕн çирĕç?
Е пĕр старик пек пит курпунлă, –
Ун пеккине таçта эп курнă!
Утса пыраттăн питĕ шăппăн,
Тую шыратчĕ шăкăрт-шăкăрт!
Туя вĕçне тăрса юлсассăн,

Телей тени йăлтах тарсассăн,
Сана пĕрех эп манас çук.
Аса илетĕп, çамрăк чух
Пĕрле çӳреттĕмĕр пит лайăх.
Çавна аса илсе-ши лартăм?
Тен, çавăнпа халь питĕ йывăр
Сывлать пуль ман пекех ват йывăç?

* * *

Хурăнăн шурă хуппи,
Çанталăкăн кĕнеки –
Тăватăп вулам пекки!
Чи çиелти чĕлтĕрти,
Шăпчăкăн тути.
Чăп-чăп! та ши-ши!
Шăхăрать пĕр ачи.
Турат тĕлĕпе пата,
Асаплă, тупата!
Такам çырса хунă тата,
«Эп сана юратап».
Туна тăршшипех йĕр,
Кунта хăть вырса йĕр.
Питĕ хăрушă иккен,
Хурăн хуппи пулма.

* * *

Курасчĕ çын курманнине,
Тупасчĕ чун çухатнине,
Ăсласчĕ ăс пĕлменнине...
Вара таçтан эп çак тĕнче пекех
Тем тĕрлĕ çуталса илме пĕлеп пулех.

## ТУПМАЛЛИ

1. Аллуна хытарса чăмăркка ăш юра...............3
2. Ах, сăнĕ ун куç умĕнчех-ха............................3
3. Юлса çур сехет... Килинччĕ...........................4
4. Ах, Зоя, Зоя, чун çунтармăш..........................5
5. Чăмăркка чечек эс татса килтĕн....................5
6. Пĕрремĕш юрпа темĕнле савăнса....................6
7. Çĕнĕ уçлăх уçăласса кĕтрĕм.............................6
8. Ăшшăн-ăшшăн пăхса ларчĕ..............................7
9. Кăвак çутă килсен..............................................8
10. Мĕнле çул ку, чăлханнă çип пек..................8
11. Халĕ нимĕн те пĕлместĕп...............................8
12. Таçта вăрманта шалта шурă-шурă.................9
13. Хĕллехи çӳлтех мар çут хĕвел.......................9
14. «Çын çиен», тенисем ахаль маар.................10
15. Канăçлă мăнă хула..........................................10
16. Каçпа пырса çапăннă кайăк..........................10
17. Юр çыранлă çап-çут кӳлленчĕк....................11
18. Урамра хальлĕхе тĕттĕм................................11
19. Урамра темĕнле йывăçсем..............................12
20. Пиншер çулсем иртрĕç унтанпа....................12
21. Çуркунне çĕр çинче.........................................12
22. Ăшăтать пуль теттĕм.......................................13
23. Çанталăк улшăнчĕ............................................13
24. Ак, пуçланать те пăтăрмах...........................14
25. Шăнкăртатса юхать çут шыв........................14
26. Мĕн-ма куçа эс курăнмастăн?.......................14
27. Çапла кăçал шыв-шур пуçланчĕ...................15
28. Пăхса тăратăп эп салху.................................15

29. Çара ӳтлĕ хĕр пек çĕр......................................15
30. Тин çеç-ха шур юр выртатчĕ........................16
31. Çумăр çăвать тĕнче тăршшипех....................16
32. Инçет вăрмана çитесчĕ...................................16
33. Эп кĕтнĕччĕ – сивĕ пулать............................17
34. Тĕтре ăшĕнче çур тĕнче пуль?......................17
35. Хĕвел патне çул кукăр-макăр........................17
36. Тĕксĕм те çумăрлă кун ăшĕнче......................18
37. Кунта пĕтĕмпех урăх хутлăх..........................18
38. Хурăн мĕнне пĕлетĕп......................................18
39. Тĕнче усаллансах çитсен................................19
40. Пĕлĕте çиçĕм çурать.......................................19
41. Эс килнĕ чух çак тĕнчене.............................20
42. Кăлăп чăххи пек çурхи вĕрене....................20
43. Ачаш акаци пĕр сăмахсăр............................21
44. Çеçке сарнă çулпа..........................................22
45. Шăлан çак тĕлте ӳсетчĕ...............................22
46. Пĕр сад çумĕпе сукмак...............................23
47. Сивĕ çумăр çуса кайрĕ................................24
48. Пĕлĕтпе ылмашлă..........................................24
49. Кунран кун турат хушнă хурăнăм..............24
50. Аслати çапать те çĕр çăтать пуль тетпĕр.25
51. Çутă çăвать, хĕвел çăвать............................26
52. Ĕнтĕ юрĕ, эс каларăн...................................26
53. Таçти уçлăхри çăлтăр ушкăнĕ евĕр.............26
54. Шур карапсем вĕçеççĕ урамра......................27
55. Мамăк вĕçет....................................................27
56. Пурăнасчĕ лăпкăн..........................................28
57. Сар вăрă Икар пек каллех...........................28
58. Ирпе пуçланать чĕкеç карусель....................28
59. Ирхи сар хĕвел пек........................................29
60. Ăçта чĕкеçсем, чĕкеçсем ăçта?......................30
61. Таса мар хула ку. Таса мар урам.............31
62. Çын кашни кун хăй шăпине суйлать..........31
63. Çулçă çӳлтен ӳкрĕ çĕре.................................32

64. Кĕркунне шăрши!...............................................32
65. Сар çулçă çине çырса хунă...........................32
66. Ылтăн çулçă сапнă çĕр çине.........................33
67. Кăвак çутă ўкнĕ чўрече çине........................33
68. Ĕнеркаç çеç тўпере..........................................34
69. Вăрман – чиркў евĕр çурт.............................34
70. Ĕмĕрсем çухалса иртсен те............................34
71. Ахалех эп хуçрăм йывăç туратне..................35
72. Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçсе анчĕ..............................35
73. Лапка-лапка юр çăвать..................................35
74. Чуна шурă юр ўкрĕ пулас?...........................36
75. Эп пурăнап никама курăнмасăр....................36
76. Эс çак пулăма кĕтнĕрен-и.............................37
77. Ирпе тăтăм та куратăп..................................37
78. Ура тĕпне шуç çапнă пуль...........................37
79. Лăпкăн тапать чĕре.......................................38
80. Ўкрĕ пилеш юр çине......................................38
81. Пĕчĕк çеç телей эп тупрăм...........................38
82. Çакă тĕнчен сив куççулĕ..............................38
83. Каç пулса килсессĕн, сар хĕвел ансан..........39
84. Пĕр шыв тĕлĕнче çутă...................................39
85. Çак пурнăç, паллах, патак мар....................40
86. Пĕрре хыт çĕрте ташлатăн...........................40
87. Хупса хунă кайăк евĕр..................................41
88. Тĕнче пĕтет тенĕ чух.....................................41
89. Ĕнтĕ эпĕ йывăç мар та.................................41
90. Хĕвел çутипе çуталнă юр..............................42
91. Çак çул çинчех эпир тупнăччĕ телей...........42
92. Çумăр хыççăн питĕ хăвăрт............................43
93. Чир-чĕр ерсен çĕре кĕрес пекех....................43
94. Çулçă ўкрĕ çўлтен майĕпен...........................43
95. Çуркунне каллех ак килсе çитрĕ..................44
96. Пире çак пурнăçра парса тет пĕр сăмах....44
97. Мĕн ĕнтĕ вăл машина?.................................44
98. Çак чиркў пек пĕчĕк сквертан......................44

99. Çу çитрĕ. Çитрĕ çуллă вăхăт........................45
100. Ирпе çапла пĕр юлташпа............................45
101. Эсĕ, çумăр, ăшă çумăр................................46
102. Епле вăл аслă, çак çĕршыв.........................46
103. Пире усал тĕрĕслет........................................47
104. Чĕре темле хăратнă пĕчĕк кайăк евĕр........47
105. И, шыв тулли, шыв тулли...........................48
106. Çитмĕл те çичĕ çырма пуçĕнче...................48
107. Тахçанах пит кĕтнĕ.......................................48
108. Пусса ăна хура тусан...................................49
109. Чăнкă çыран хĕрринче çĕр ишетпĕр..........49
110. Илтрĕм эп урăхла темле сас.......................49
111. Сарă çулçă, сарă çулçă.................................50
112. Ирпе йăлт шăнтса пăрахрĕ..........................50
113. Нимле хуйхă та çук.....................................50
114. Çĕр те пĕр тĕрлĕ тĕнче..............................51
115. Юр йăтнă йывăç пит хитре.......................51
116. Мĕне курма пĕлет-ха ман чĕре..................51
117. Мĕн-ма мана эс куç пăватăн?....................52
118. Çил çинче сив çилтен пытанса
эпĕ пытăм....................................................52
119. Çут çурта ташшине ас тăватăп..................52
120. Ик хут иккĕ тăваттă, терĕç.........................53
121. Юлашки аслати пек кĕрлерĕ.......................54
122. Ятсăр шыв тăрăх икĕ кайăк вĕçрĕç...........54
123. Таçта аякра, Казах çĕрĕнче.........................55
124. Куç илмесĕр, чуна чармасăр.......................55
125. Эс килтĕн çĕр çине хĕвел элчийĕн.............56
126. Телейĕн çĕршывĕ те пур, тет, таçта...........56
127. Шурă, шурă, питĕ шурă юр.......................57
128. Ку вĕрӳçĕ чĕлхи пек пулчĕ.........................57
129. Урамра вăйлă тăвăл кĕрлет.........................57
130. Турă чунлă пулĕ эсĕ, чăн та......................58
131. Авалхи вăхăтсем çаврăнса килчĕçĕ.............58
132. Тăраттăн пăхса эсĕ чаплăн.........................58

133. Хӗвел шӑтса тухрӗ курӑк пулса..................59
134. Уйӑх та пур, хӗвел те пур, теççӗ...............59
135. Урамра çутӑ кун, туй-çу..............................59
136. Мана пӗрре пӑхса илни те çитетчӗ...........60
137. Çӑлтӑрсем пек эпир çӳрерӗмӗр....................60
138. Эпӗ те çак тӗнчене тума пултаратӑп-çке...60
139. Таçта аякра, тӗтреллӗ каçра.........................61
140. Вунтӑваттӑ çаптӑр–ха....................................61
141. Аналалла ӗрӗхтерет пек вӑхӑт.....................61
142. Пӗр тӗттӗм кӗтес çумӗнче.............................62
143. Ку темӗн пӗрре те курманччӗ.....................62
144. Пӑхатӑп та, курӑк питӗ савӑк......................63
145. Эпӗ ӗнтӗ ку çулпа çӗр пин хут утнӑ........63
146. Тин кӑна ӑшӑччӗ............................................64
147. Хӗл кунӗпе тӗл пулчӗ çур кунӗ..................64
148. Каллех, акӑ, эп ас илетӗп............................65
149. Каллех çулçӑ йӑтрӗ шур хурӑн...................65
150. Тепӗр чухне эпӗ хама ват çерçи
пек туятӑп пулас............................................66
151. Пӗр карчӑк пек эпӗ хам та........................66
152. Пӗр пӗчӗк ача чечек татать те..................67
153. Ман ывӑлӑм килчӗ салтакран.....................67
154. Пурте пур чухне пурте пур пек................68
155. Кӑвӑл-кӑвӑл та кӑвӑл-кӑвӑл.........................68
156. Ытарайми куçпа пӑхса илетӗп тепӗр хут.69
157. Сӑмса айӗнчи курӑнмасть теççӗ..................69
158. Куратпӑр хамӑра пӗр пек, пӗр тан...........69
159. Мӗн уçӑлчӗ?.. Ним те уçӑлман вӗт-ха!......70
160. Пилеш палӑра пуçларӗ.................................70
161. Ӑшӑ çумӑр çӑвать кунӗпе..........................71
162. Август, август, шӑллӑ çурла........................71
163. Чун çил çинче çулçӑн вылянчӗ..................72
164. Сӑвӑ çырас килми пулчӗ.............................72
165. Ӑçтан килсе ларнӑ вӑл?...............................73
166. Тепӗр чух ирхи хӗвел çутипе

рехxетленетчĕ...................................................73
167. Çырма хĕрринчи ват йăмра пек..................74
168. Тĕл пулманччĕ санпа пĕр çулталăк.............74
169. Санпа тепĕр хут тĕл пуласшăн....................74
170. Ирпе шупка уйăх куртăм.............................75
171. Халь ĕнтĕ тĕнче саланать майĕпен............75
172. Кун килет те каять çарапуçăн.....................76
173. Пахча çумĕпе иртсе кайрăм........................76
174. Пĕр çулçă та ларса юлмарĕ........................77
175. Халĕ ĕнтĕ манăн пĕртен пĕр пурнăç
юлнă.........................................................77
176. Сăмах калама васкамалла мар....................78
177. Вăрман темĕнле туннель пек.......................79
178. Кĕлт кăна пăхса илчĕ хĕвел........................79
179. Сивĕ, сивĕ, сивĕ тесе пыратăп....................80
180. Вăрăм чăрăш авăнать те.............................81
181. Эс пулă пек питĕ вылявлăн........................81
182. Пăлт та палт! çаврăнса ӳкетĕп...................81
183. Унта кив çăва тетчĕç..................................82
184. Юр çинчи курăк ытла та симĕс.................82
185. Пăлтăр-палтăр! çĕр куçатчĕ.......................83
186. Хаçата çăкăра илнĕ пек илетчĕç................84
187. Тĕнче çути таçта çухалчĕ............................84
188. Хурăнăн шурă хуппи...................................85
189. Курасчĕ çын курманнине............................85

Желтов Михаил Павлович

# Çул çинче çырнă сăвăсем

## Стихи на пути

Стихи
на чувашском языке

Формат 60x84
Гарнитура Times
Бумага принтерная
Тираж 10 экз.
Самиздат «Семья»